К84.89(=Чув)
А41
Ч-48524



Сантăр АКСАР

# Итле-ха, ывăлăм

Национальная библиотека ЧР
4-048524

К84.84(=Чув)
А41

## Сантăр АКСАР

# Итле-ха, ывăлăм

Калаçусем



Шупашкар
Чăваш кĕнеки издательстви
2016

УДК 821.512.111-3
ББК 84 (2=635.1)-44
А 41

Сантӑр Аксар
А 41 Итле-ха, ывӑлӑм: калаҫусем / Сантӑр Аксар. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2016. — 63 с.
ISBN 978-5-7670-2485-8

«Ҫамрӑкла вӗренни чул ҫинче, ватлӑхра вӗренни шыв ҫинче», — тенӗ ваттисем. Ачасене вӑхӑтра ӑс пани паха. Ҫак шухӑша тӗпе хурса хатӗрленӗ те ку кӗнекене Сантӑр Аксар. Пурнӑҫра кашнишӗн пӗлтерӗшлӗ ыйтусене хускатнӑ калаҫусенче. Унта пурӗ вун пилӗк тема: аннӳне сума су; ҫуралса ӳснӗ тӑван кӗтесе юрат, ӑна ан ман; ҫут ҫанталӑка упра; чӑваш чӗлхине — аннӳ чӗлхине — хисепле...

Ҫавӑн пекех чӑваш халӑхӗн пуянлӑхӗ пирки те каласа парать вӗрентӳҫӗ-ӑсчах: чӑваш тӗрри-эрешӗ, техӗмлӗ апачӗ...

Кашни темӑна Сантӑр Аксар ӑш пиллӗ калаҫу пек йӗркеленӗ, вӗсене тӗрлӗ тӗслӗхсемпе ҫирӗплетнӗ.

и-48524

УДК 821.512.111-3
ББК 84(2=635.1)-44

ISBN 978-5-7670-2485-8

© Сантӑр Аксар, 2016
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2016

Национальная библиотека
Чувашской Республики

Проверено 10 ОКТ 2017

# Çамрăк тусăмçăм, чăваш ачи!

Вырăссен аслă çыравçи Антон Павлович Чехов çапла каланă: «Çынра пурте илемлĕ пулмалла: сăн-сăпачĕ те, çи-пуçĕ те, чун-чĕри те, шухăшĕ те». Питĕ тĕрĕс те аслă сăмахсем. Этем ырă та чипер пуласси, паллах, чи малтан хăйĕнчен килет. Çавăнпа та санăн, çамрăк тусăм, мĕн пĕчĕкрен аслаçу-асаннӳн, кукаçу-кукамун, аçу-аннӳн, пиччӳ-аппун, тăвану-пĕтенӳн, ял-йышăн мĕн пахи-лайăххи пур — ăна туллин ăша хывса, алла илсе пымалла.

Пирĕн халăхăмăрăн пархатарлă наци паллисем тем чухлех. Вĕсен шутĕнче: тĕлĕнмелле хастарлăхпа ĕçченлĕх, сапăрлăхпа сăпайлăх, тасалăхпа тӳрĕлĕх, чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх, иксĕлми аптраманлăх. Ку пахалăхсене чăваш халăхĕ инçетри аваллăхран ламран лама куçарса, тăсса, нумайлатса пынă. Сирĕн те, яш ăрун, хăвăрăн несĕлĕрсен ырă йăли-йĕркисене вăйлатса, пуянлатса пырасси пирки халех шутламалла.

Кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи-пуплевĕ, юрри-ташши, купăсĕ-сăрнайĕ, эрешĕ-тĕрри, апачĕ-çимĕçĕ-çке... Чăвашсен те вĕсем ыттисеннипе пăтрашăнми ăрасна, урăхла. Халăхăмăр чăн сăн-сăпатне ан çухаттăр тесен ку пахалăхсене упрамалла, халăх хушшинче сармалла, çĕнĕ

шая çĕклемелле. Çак енĕпе те, çамрăк тусăм, ывăлăм, аслă ăрусем умĕнче тивĕçӳ, яваплăху пысăккине ăнланатăн пулĕ тетĕп?

Этемлĕх нумай-нумай ĕмĕр хушшинче çĕр çинче ырăпа илеме, пархатарлăха аталантарас енĕпе паха опыт пухнă. Килĕшӳпе çураçу, юратупа туслăх, кăмăл-сипет, пĕлӳ, ăшăлăхпа çутăлăх йăхран йăха куçса, лайăхланса пынă. Çамрăксем яланах аслисенчен тĕслĕх илсе, вĕренсе малалла утнă. Вĕсем çĕр çинчи ырăпа илем тĕнчине çĕнĕ йĕрсем хывнă, витĕмлĕ тĕс кĕртнĕ, начар пулăмсемпе туртăмсене вара пур майсемпе те чакарма тăрăшнă. Эсĕ те, паянхи чăваш ачи, çавсенчен юлмастăнах ĕнтĕ.

Эпĕ те çак пĕчĕкçĕ кĕнекере санпа шăпах çав ыйтусем тавра калаçасшăн. Хамăн шухăшту йăма, кăмăл-туртăма сан патна çитересшĕн, хам курни-илтнине çырса кăтартасшăн, сĕнӳсемпе канашсем парасшăн. Вĕсем сана пулăшайсан, усă кӳрейсен эпĕ тем пекех савăннă пулăттăм.

*Кĕнеке авторĕ*

# Аннемĕр — кун-çул никĕсĕ

Çапла, çамрăк тусăм, сăмахăма эпĕ аннемĕртен пуçласшăн. Çыннăн тăванĕсем нумаййи пурне те паллă-ха. Ашшĕ-амăшĕ те, аслашшĕ-асламăшĕ те, кукашшĕ-кукамăшĕ те, пиччĕшĕ-аппăшĕ те, шăллĕ-йăмăкĕ те тата ыттисем те пур унăн. Çапах та вĕсенчен чи хакли те чи çывăххи анне шутланать. Мĕншĕн тесен вăл ачана юн парать, чун парать, кун парать, çут тĕнчене кăларать.

Анне — пурнăç пуçламăшĕ. Анне — кун-çул никĕсĕ, унăн вĕççĕр тĕрекĕ. Анне — халăхăн шанчăкĕ, чысĕ, мухтавĕ. Çулпуççемпе паттăрсем, сăвăçсемпе ăсчахсем тем пек ăслă пулччăр — пурпĕрех амăшĕ вĕсенчен çӳлерех тăрать. Вĕсене çуратнă, кăкăрне ĕмĕртнĕ, сăпкара сиктернĕ, лăпкаса ӳстернĕ, утма, калаçма вĕрентнĕ, çунат парса çӳлелле вĕçтернĕ. Лешсем вара унăн ачисем кăна. Ывăлĕн-хĕрĕн кашни çитĕнĕвĕнче — амăшĕн çитĕнĕвĕ, кашни савăнăçĕнче — амăшĕн савăнăçĕ, кашни кулянăвĕнче — амăшĕн кулянăвĕ.

Ĕмĕрсем хушши халăх хĕрарăма мухтаса, ăна хакласа питĕ нумай ăслă сăмахсем каланă. Чăвашсен те ун йышшисем сахал мар: «Анне — Кепе, унпа вăрçма юрамасть», «Анне

кёлли тинёс тёпёнчен кăларать», «Анне пĕрре, Тăван çĕршыв пĕрре», «Амăш патакĕ — ăс патакĕ», «Амăшĕ епле — хĕрĕ çапла», «Амăшĕ ачишĕн Тур пулăштăр тет», «Амăшĕшĕн ача паха», «Амăшĕшĕн ачисем алăри пӳрне пек»...

Чăвашсен сăрă ăстисем аннене халалласа мĕн чухлĕ ӳкерчĕк ăсталаман пулĕ. Вĕсен шутĕнче: А. Кокелĕн 1905 çулта хайланă «Чăваш хĕрарăмĕн портречĕ»; Н. Сверчковăн «Арăм портречĕ» (1918), «Хĕр вăрлани» (1938); В. Макаровăн «Пан улмиллĕ чăваш хĕрĕ» (1938), «Çеçпĕл амăшĕ» (1961); М. Спиридоновăн «Григорьева сăвуçă» (1938), «Чăваш хĕрĕ Ирина» (1945); В. Семеновăн «В.П. Кузнецова» (1975); Р. Федоровăн «Г.Н. Волков академик амăшĕ» (1995); Н. Овчинниковăн «Космонавт амăшĕ» (1972), «Чăваш мадонни» (1974), «Салтак амăшĕ» (1978); А. Даниловăн «Анне» (1998) ӳкерчĕкĕсем.

2003 çулта Шупашкар варринче, аслă Атăл кукри хĕрринче, Анне управçă палăк ӳссе çĕкленчĕ. Çак монумент — пирĕн йăхташăмăрсем хăйсене çуратса пăхса ӳстернĕ çынна вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине, хисепленине, парăннине çирĕплетекен питех те пархатарлă тĕслĕх.

Аннемĕр чăваш ӳнерĕн ытти тĕсĕсенче те самаях анлăн сăнланса юлнă. Уйрăмах ку енĕпе сăмахлăх палăрса тăрать. Хĕрарăм сăнарĕпе пуян хайлавсем 1917 çулхи Октябрь пăлхавăрĕччен йышлă çуралаççĕ. Пысăк калăпăшлă жанрсенчен И. Юркинăн «Мул» повеçне, Турхан Яккăвĕн «Варуççи», Н. Шупуççыннин «Янтрак янравĕ», К. Ивановăн «Нарспи» поэмисене асăнмалла.

Чăваш поэзийĕнче «Анне» ятлă пĕрремĕш

сăвва XIX ĕмĕр вĕçĕнче Турхан Яккăвĕ çырнă. Çав саманари чăваш амăшĕн салхуллă сăнарне автор ача куçĕпе, ача чунĕпе чĕрене тивмелле ӳкерсе кăтартать:

Аннем кайнă сарăхайса, —
Пичĕ-куçĕсем — шурă тăм.
Аннем çине эп пăхсассăн
Куççуль çумăр пек юхатчĕ.
Эп куççуль кăтартас маршăн
Ӳпне выртаттăм — йĕреттĕм...

XX ĕмĕрте тĕнчери чи юратнă çын çинчен çырман пĕр чăваш сăвăçи та юлман-тăр. Кунта П. Хусанкайăн «Анне», Ухсай Яккăвĕн «Анне мана тирпейлĕ пиеленĕ...», М. Сениэлĕн «Анне», Ю. Сементерĕн «Амăш чунĕ» сăввисене асăнни те çителĕклĕ. Çак жанрлă хайлавсенчен чылайăшне пирĕн композиторсем юрра хыврĕç.

Аннене халалланă юрăсене илес пулсан, чăвашсен чухлĕ нихăш халăхăн та çук пулĕ. Вĕсем Шупашкарти радиопа тата телевиденипе, тĕрлĕ уявсемпе концертсенче янăраççĕ. Чи çепĕççисем те чи селĕммисем: А. Сергеевпа А. Галкинăн «Аннене», Г. Хирпӳпе В. Урташăн «Тавах, аннем», А. Сергеевпа Ю. Плотниковăн «Лар, аннеçĕм, юнашар», Ю. Жуковпа В. Шемекеевăн «Юратнă, кăмăллă аннем», Ф. Лукинпа В. Давыдов-Анатрин «Анне, тĕнчере эс пĕрре» юррисем. Ку вăл — пирĕн халăх аннене чăннипех те сăваплă та асамлă çын вырăнне хунине, ăна яланах пуç тайса тав тунине çирĕплетекен тата тепĕр пархатарлă пулăм. Çакна мухтавлă ăсчахăмăр Г. Волков академик та хăйĕн ĕçĕсенче пĕрре мар палăртать: «Анне — пурнăçра чи чыслă та пархатарлă тема. Тĕнчипех вăл çавнашкал. Апла пулин те чăвашшăн çав тема

темле таранрах шухăшпа çыхăннă. Мĕншĕн тесен халăх хăйĕн йăли-йĕркинче аннене Турăпа тан шутлать, ăна уйрăмах пысăк вырăна хурать».

Çапла, питĕ тĕрĕс те вырăнлă калать Геннадий Никандрович. Анне — чăвашшăн çутă та ялтравлă ят. Çĕршер çул хушши çапла пулнă вăл, халĕ те çаплах, ӳлĕм те çаплах пулĕ.

Паллах, пăтравлă та хумханчăк саманара пире йĕри-тавра сиенлĕ те синкерлĕ пулăмсем хупăрласа илчĕç: ĕçкĕ-çикĕ иртĕхĕвĕ, вăрçă-хирĕçӳ, çарату-аркату, аскăнлăх-ясарлăх, наркомани, токсикомани, СПИД... Çаксем пурте сăпайлă та сапăр, тăрăшуллă та ĕçчен, таса та тӳрĕ чунлă чăваш тĕнчине хĕсеççĕ те хĕсеççĕ. Анчах çухалса, аташса кайма юрамасть. Чи малтан хамăрăн тăванлăх, чăвашлăх туйăмне упраса хăвармалла пирĕн. Кил-йыш, çемье çине ытларах таянмалла. Ку енĕпе патриархăмăр И. Яковлев халалне яланах асра тытасчĕ. Акă мĕн пилленĕ вăл пире: «Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан та хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьен лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа ан варлăр, ӳсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр валли тĕреклĕ чарак лартса хурăр».

Пĕрремĕш калаçăва вĕçлесе пынă май каллех Г. Волков академик каланисем аса килеççĕ.

Унăн сăмахĕсемпе чĕнсе калам: «Кирек мĕнле этемĕн те пĕтесси вăл хăйĕн амăшĕ умĕнчи тивĕçне маннинчен пуçланать. Асра тыт çакна. Санăн аннӳне çынсем çемьепе йăхăн совеçĕ тесе те калаççĕ. Амăшне хисеплемен çемьере пысăк чунлă ачасем пулаймаççĕ. Хальлĕхе аннӳ чĕрĕ пулсан эсĕ те сывă. Вилĕмсĕр. Вăл çук тăк — çак çĕр çинче пурте тĕрексĕрленет, çемçелет, санăн тĕрев юписемпе шăпусем те чĕтренме-лăканма тапратаççĕ».

Ку сăмахсем, çамрăк тусăм, пĕр сана анчах мар, санăн аçу-аннӳне те пырса тиveççĕ. Манса ан кай эсĕ вĕсене. Аннӳ пилне-халалне пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕрт. Унăн сăмахне ĕмĕр тăршшĕпех асра тыт. Ăна итлемесен пĕтетĕн, арканатăн. Аннӳнтен илнĕ ырă туйăмсене, унăн мĕнпур чун пуянлăхне хăвăн урлă ывăлусемпе хĕрӳсене пар. Ху та маттур пул, ачусене те маттур атте-анне пулма хатĕрле. Пире çуратнă ытарайми çынсен паха енĕсем ĕмĕр-ĕмĕр пурăнччăр, малалла тăсăлччăр, нумайланса, вăйланса, аталанса пыччăр.

Аннӳне яланах хисепле, сума су, çамрăк тусăм. Пĕрмаях тимлĕ пул, ун валли чи çепĕç те ăшă сăмахсем суйла. Кун-çул вĕçĕнче ăна канлĕ ватлăх сун. Пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ пулсан — унăн вилтăпри умĕнче пуçна тайса тăма, сума сума ан ман.

## Ытарайми тăван кĕтес

Мĕн вăл тăван кĕтес? Хамăра кун панă атте-анне, çывăх пĕлĕш-тăван, хурăнташсем, кӳршĕсем, ял-йыш. Вăл — тăван кил-çурт, сад пахчи, анаткаспа тукас тата вăтакас урамĕсем, çуралса ӳснĕ ял. Хама илес пулсан тăван кĕтес вăл — таврари Тикеш, Ишек, Турхан, Шăхаль, Тăрăн, Катек ялĕсем. Вăл — пӳрт умĕнчи лаштра йăмрапа йăрăс хурăн, лупас хыçĕнчен пуçланакан çĕр улми йăранĕсем, садри улмуççисемпе чиесем, пĕчĕк хăмла пахчи, вĕллесем. Вăл — ял варринчи икĕ хутлă шкул, Культура çурчĕ, стадион, пĕве, тӳпемри çил арманĕ, лаша вити, машинăсемпе тракторсем тăракан вырăн, йĕтем. Вăл — укăлчаран инçех мар хăвалăх витĕр иртекен юхан шыв, ун çумĕнчи улăх, хамăр акса çитĕнтернĕ икĕ хырлăх, ултă-çичĕ çухрăма çити тăсăлакан уйсемпе хирсем, Туливар çăлкуçĕсем. Вăл — хамăр ялăн шăпипе кун-çулĕ, унăн аваллăхĕ, аслă урамри часавни, юхан шыв леш айккинчи пăлхарсем никĕсленĕ хула вырăнĕ, ку енчи сăваплăх карти, Улăп тăпри, Киремет кати, аслă масар. Вăл — хамăрăн лăпкă та сăпайлă халăхăн çепĕç чĕлхи-калаçăвĕ, сăвви-юрри, ваййи-кулли, йăли-йĕрки, ĕçĕ-шывĕ...

Пархатарлă та ырă чунлă кашни çыншăнах тăван кĕтес хаклă та сăваплă. Мĕншĕн? Çуратнăшăн, çут тĕнчене кăларнăшăн. Пăхнăшăн, лăпканăшăн, ачашланăшăн, ятланăшăн, хăтăрнăшăн, çын тунăшăн. Чуна тасалăхпа та тӳрĕлĕхпе, сăпайлăхпа та сапăрлăхпа, маттурлăхпа тата аптраманлăхпа пуянлатнăшăн. Йывăрлăхсемпе чăрмавсене çĕнтерме, усал-тĕселсене аркатма, çут тĕнчепе этемлĕхе юратма хăнăхтарнăшăн.

Çуралнă кĕтесе тепĕр майлă пĕчĕк тăван çĕршыв теççĕ. Çапла вара, икĕ Тăван çĕршыв этемĕн: пĕчĕкки тата пысăкки. Пĕрремĕшĕ — кун курса ӳснĕ хамăр ен пулсассăн, иккĕмĕшĕ — куç виçейми анлă çĕршывăмăр — Раççей патшалăхĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăннă, пĕр кăвапаран темелле. Пин-пин пĕчĕк тăван çĕршывран мăнни калăпланать, ӳссе чăмăртанать.

Тĕрлĕ саманара пурăнса тĕрлĕ пурнăç курса пăхрăмăр. «Тăван çĕршыв» пуплеве те пăсса ăнлантаракансем тупăнчĕç: пĕчĕккин пĕлтерĕшне ытлашши чакарма, пысăккин хапине виçесĕр хăпартма хăтланчĕç. «Çурт мар, урам мар пирĕн адрес, Совет Союзĕ — пирĕн адрес» йышши юрăсем юрлаттарчĕç. Тĕнчери хăшхăш халăхпа патшалăх историне вĕрентместчĕç пулĕ çамрăк ăрăва, хамăр наципе республикăн, тăван кĕтесĕн шăпи-кун-çулĕпе паллаштарасси çинчен вара аса та илместчĕç...

Çакă, паллах, усал йĕрсĕр юлмарĕ, сиен кӳмесĕр иртмерĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80—90-мĕш çулĕсенче хăйсене çуратнă халăхран ютшăнса йĕрĕнекен, тăван чĕлхепе йăла-йĕркерен писекен çамрăксем йышлăланса кайрĕç.

Пĕррехинче, Самар тăрăхĕнчи чăваш ялĕсене кайсан, чуна пăшăрхантаракан сăнсене курма тивнĕччĕ. Улт çĕр киллĕ пĕр ялта хăйсене çут тĕнчене кăларнă хаклă çынсене атте-анне тесе чĕнекенсем пурĕ те икĕ çемье анчах тăрса юлнă, ыттисем пурте «папа-мама» сăмахсемпе усă кураççĕ.

Чылай çамрăк чăвашла вулама та, çырма та пĕлмест. И. Яковлев, Н. Бичурин, П. Егоров, Т. Кривов, К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, халăхăмăрăн ытти мухтавлă ывăлĕсемпе хĕрĕсем çинчен те пуçласа илтрĕç вĕсем ун чухне. Чăваш нацийĕн паха паллисене — ĕçченлĕхне, сăпайлăхне, тасалăхне... — çухатса пыракан яшсемпе хĕрсем те сахал мар. Хăш-пĕрисем усал туртăмсемпе пулăмсен серепине лекеççĕ.

Пĕрисем кунĕ-кунĕпе ĕççĕр çапкаланса çӳреççĕ, мотоциклсемпе урамсем тăрăх катаччи чупаççĕ. Теприсем ушкăнпа çапăçма тухаççĕ, ĕçеççĕ-иртĕхеççĕ, вăрлаççĕ-çаратаççĕ, аскăн ĕçсем тăваççĕ.

Самана улшăнсан ку енĕпе ырă çĕнĕлĕхсем пулса иртрĕç-ха темелле. Анчах кăлтăксемпе çитменлĕхсем те пайтах-ха. Пĕчĕк тăван çĕршыва чăннипех те тивĕçлипе сума суса хакламалла тăвас тесен питĕ нумай ĕçлемелле.

Çамрăк тусăм, çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ санран та, санăн тимлĕхӳнтен те чылай килет. Тăван кĕтесĕн паха йăли-йĕркине алла илме, халăхра сарма, нумайлатма çитĕннисемпе пĕрле хастартарах хутшăнсам эс. Çак ыйтусемпе йĕркеленĕ кружоксемпе секцисене, семинарсене çӳре, хăвăр тавралăх историне çыр, тĕпче, тишкер, асаилӳсем пух, ĕçле. Тăван çĕршывăн чăн-чăн паттăрĕ, патриот-интернационалисчĕ пулса

çитĕн. Ӳссе çын шутне кĕрсен сирĕнтен пĕрисем вырăнтах юлса Чăваш Ен ятне-шывне, чысне-сумне çĕклес тесе ырми-канми тăрăшĕç. Теприсем тĕрлĕ специальноçсем алла илсе анлă çĕршывăмăрăн тĕрлĕ вырăнĕсене саланĕç. Анчах кирек ăçта пурăнсан та, кирек мĕнле пысăк çын пулса тăрсан та пуçна ан каçăрт, тусăм. Кирек епле аякка кайсан та Тăван çĕршывăн ырă сывлăшне, çăкăр-тăварне, аçăраннĕр çĕрне, чĕлхине, йăлине, юррине манас марччĕ, килсех тăрасчĕ тăван кĕтесе, ăна пуç таясчĕ, малалла чечекленме, çĕнĕ те парка хунавсем ĕрчетме пулăшасчĕ.

# Пурăнах, сут çанталăк!

Ун чухне эпĕ çиччĕ-саккăрти ачаччĕ. Аттепе пĕрле лашапа Шăхаль вăрманне кайнăччĕ. Çамрăк çăкалăх тĕлне çитсен чарăнтăмăр. «Çăпата тума пушăт хатĕрлер-ха кăштах», — терĕ атте. Çав вырăнта çăка нумайччĕ. Тĕмĕн-тĕмĕн ӳсетчĕç. Ал туйи хулăнăшшисем те, сенĕк аври пеккисем те, шерталĕх йышшисем те пурччĕ.

Атте пĕр тĕмĕри çамрăк çăкана касма пуçларĕ, эпĕ — тепринчине. Хам тĕме касса пĕтерес патнех çитнĕччĕ, тепĕр икĕ хунав кăна юлнăччĕ. Сасартăк атте мана чĕнчĕ. Эпĕ ăнланмасăр ăна куçĕнчен чăл пăхрăм. «Юлччăр, çĕнĕ хунавсем сарччăр, йышланччăр. Тĕппипех пĕтерер мар. Пысăк çăка кайран çынна мунча пурилĕх те, хуп валли те кирлĕ», — терĕ вăл.

Çапла эпир кашни тĕмрех икĕ вулăран кая мар хăварса пытăмăр. Хамăра кирлĕ чухлĕ хатĕрлесен аттепе малалла кайрăмăр. Юманлăха çитсен çĕре тăкăннă йĕкелсене пухма тытăнтăмăр.

«Йĕкел сыснашăн усăллă, — ăнлантарчĕ атте, — ăна çисен вăл лайăх ӳсет, какайĕ таса та тутлă пулать». Эпĕ хавхаланса кайрăм. Çапăсенчен шăпăр туса çыхрăм, юмансем айĕнчи

йёкелсене пĕр хăварми шăлса пуçтарма пикентĕм. Çакă каллех аттене темшĕн килĕшмерĕ. «Йёкелсене кăштах хăваркалас та пулать, — терĕ. — Ним юлмасан вăрманти чĕр чунсем мĕнле пурăнĕç, епле хĕл каçĕç? Вĕсемсĕр хунав та шăтса тухаймĕ». Эпĕ вăл каланă пек турăм...

Çаксене аса илтĕм те паян тăван халăхăн çут çанталăка упрас, хӳтĕлес ырă туйăмĕ, йăлийĕрки куç умне тепĕр хут яр уççăн тухса тăчĕ.

Пӳрт-çурт тавра йывăç-курăк лартнă чух киле те илем кӳтĕр, хуçалăха та усă патăр тесе шутланă чăваш. Унăн юратнă йывăçĕ — йăмра. Ăна урама капăрлатнипе пĕрлех вут-кăвартан та хӳтĕленме пулăшать тесе хакланă. Çĕмĕрте те мĕн авалтан хисепленĕ. Мĕншĕн тесен çак йывăç çуркунне шурă шупăр пĕркенсе пĕтĕм тавралăха илемлетнĕ. Хăйне евĕр тутлă шăршă кăларса сывлăша уçăлтарнă, сиенлĕ хурткăпшанкăсемпе микробсене пĕтернĕ. Хĕллесенче вара унăн типĕтнĕ çимĕçĕнчен хатĕрленĕ чейпе, тĕрлĕ йышши шĕвекпе вар-хырăм чирчĕрĕнчен сипленме усă курнă.

Чăваш çынни тата яланах вĕсен кайăксен çывăх тусĕ пулнă. Эпĕ пĕчĕк чух хам çуралнă Еншикре килсеренех шăнкăрч вĕлли туса çакаттăмăр. Киввисене тепĕр хут тасатса тирпейлеттĕмĕр. Пӳрт çамкисене, кĕтесĕсене кăвакарчăнсем йăва çавăрма ятарласа шăтăксем, çӳлĕксем туса хăварнăччĕ аттесем. Лупас айĕнчи каштасем çинче йĕркипе чĕкеçсемпе шуркутсен тăм пӳрчĕсемччĕ. Çуркунне-çулласенче вара пӳрт-çурт тавра çунатлă туссем — кăвакарчăн, чĕкеç, шăнкăрч, пăрчăкан — ярăнса çеç çӳретчĕç. Хăйсен кĕвви-çеммипе вĕсем

тавралăха янрататчĕç, çынсене килентеретчĕç.

Анчах халĕ хамăр ене пырсан шăнкăрч вĕллисене те сайрарах куратăп. Вĕçен кайăксен йышĕ те сахалланнă пек. Йывăç-курăкĕпе те савăнмаллиех çук.

Чылай çĕрте чăвашăн çеремлĕхри çăлсене пурасем ярса тирпейлĕ те таса тытас, çыранри çăлкуçсене валаксем лартса пăхса тăрас ырă йăли çухалсах пырать. Çăлсене машина-тракторпа таптаса, выльăхсене ярса çĕмĕрнине курма питĕ йывăр. Пăлара, Çирĕклĕре тата ытти пĕчĕк юхан шывсенче те халĕ хĕрĕх-алă çул каяллахи чĕлтĕрти вĕтĕ хумлă тăрна куçĕ пек тăрă шыва кураймастăн. Вĕсем пăтранчăк, çывăхра ларакан фермăсенчен анакан тислĕк шĕвекĕпе вараланнă.

Хресченĕн тĕп пуянлăхĕ çĕр пулнă. Вăл ăна тăрантарнă, тумлантарнă, савăнтарнă. Çавăнпа та чăваш мĕн авалтан çĕре пуç тайнă, хакланă. Шыв-шур çурасран, çил касса çĕмĕресрен, хура тăпра сийĕ чакасран сыхланă, ăна тислĕкпе юшкăн-туйăн тăкса тулăхлатма тăрăшнă. Çырмасем ишĕлесрен çырансене çеремсем хурса, йывăçсем лартса, çатансем тытса çирĕплетнĕ.

Шел, эпир чылай çĕрте çак ĕç кирлĕ шайра пырать тесе калама пултараймастпăр. Халĕ çулсеренех çырмасем çĕмĕрнине пула пирĕн республикăра виç çĕр-тăват çĕр гектар çĕр çухалать. Çавал шывĕ хăй кашни çул Атăла пилĕк миллион тонна юшкăн тăпри юхтарса кăларать. Хирсене наркăмăшлă им-çампа сапнă май усăллă вĕçен кайăкпа хурт-кăпшанкă чылай пĕтет.

Çут çанталăка вараланăшăн, паллах, чи малтан аслисем айăплă. Нумай çĕрте ял хуçалă-

хӗпе промышленность предприятийӗсен пуҫлӑхӗсем чи малтан ытларах тупӑш илесси ҫинчен ҫеҫ шухӑшлаҫҫӗ. Вӗсене ҫынсен сывлӑхӗ начарланасси, ҫут ҫанталӑк тасамарланасси ытлашшиех шухӑшлаттармасть.

Ҫут ҫанталӑка хӳтӗлеме пӗтӗм халӑхӑн, ҫав шутра ачасен те, хастарлӑн хутшӑнмалла. Чӑвашсен ку ӗҫри ламран лама куҫса пыракан пархатарлӑ йӑлисене ҫӗнӗрен вӑйлатса ярасчӗ. Тӑван тавралӑха юратса, уншӑн тӑрӑшса, ӑна ырӑ сунса паян ҫапла калар: «Пурӑнах, ҫут ҫанталӑк!»

Ч-48524
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# Шăнкăр-шăнкăр чĕлхемĕр

Тĕнчере тĕрлĕ халăх пурăнать. Вĕсен кашнийĕнех хăйĕн кун-çулĕ, шăпи, йăли-йĕрки, ӳнерĕ, чĕлхи. Çĕр çинче пурăнакансем 2,5 пин ытла чĕлхепе калаçаççĕ. Пурте хăйне евĕр. Кашнийĕн — хăйĕн сасси, çемми, кĕвви. Вăрман тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем — карăксемпе куккуксем, шăпчăксемпе шăнкăрчсем... — юрлани-авăтнипе илĕртӳллĕ, янăравлă. Çĕр ан-немĕр те çавнашкалах. Тĕрлĕ халăх юнашар килĕштерсе пурăннăран, харпăр хăй сассипе шăкăлтатса пупленĕрен эреветлĕ, пехетлĕ. Вĕсенчен пĕри пĕтни те — этемлĕхшĕн виçесĕр çухату. «Халăхăн чи аслă пуянлăхĕ вăл — унăн чĕлхи», — тенĕ тĕнчипе паллă ăсчах Д. Лихачев академик.

Чăваш чĕлхи те хăйне евĕр хӳхĕм, хитре те илемлĕ. Унра — сар хĕвел ăшши, шăнкăр шыв юххи, тӳлек çил уççи. Вăл ачаш та, хаяр та, сулмаклă та, хăватлă та. Ахальтен мар ăна Н. Гарин-Михайловский, С. Аксаков, М. Горький, Н. Крупская, В. Сухомлинский, тĕнчери ытти паллă çынсем юратса тăнланă, ыр сунса хакланă. Василий Александрович каланă йĕркесене кăна илер акă: «Чĕлхĕр пуянлăхĕ, — тет вăл, — сăмахăрсен сăнарлăхĕ мана пит

тарӑн шухӑша ярать. Сирӗн халӑхӑрӑн хӑвӑр та халиччен пӗлмен пысӑк культурӑллӑ общество енӗпе пысӑк аталануллӑ истори тапхӑрӗ пулнӑ пулмалла».

Хамӑр халӑхӑн мухтавлӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсем те тӑван чӗлхемӗре юратса-савса ырӑ сӑмахсем сахал мар каланӑ. Ухсай Яккӑвӗн классикӑлла «Чӑваш чӗлхи» сӑввинче ҫакӑн пек йӗркесем пур:

Туссем калаҫнӑ чух, тӑван чӗлхемӗм,
Шур акӑш тӗкӗ евӗр эс ҫемҫе.
Санпа ман халӑх чунӗ те илемӗ
Ҫӳрет ҫӳлте те ҫӗр ҫинче вӗссе.

Тепӗр ҫӗрте вӑл ҫапла хавхаланса ҫырать:

...Чӑваш чӗлхи вӑл — манӑн чун та ӗмӗт,
Хӗвел те уйӑхӑм — тӑван чӗлхе.

Петӗр Хусанкайӑн та хамӑр чӗлхемӗре халалланӑ сумлӑ ҫаврасем темӗн чухлех. Акӑ вӗсенчен хӑшӗ-пӗри:

Чӑваш сӑмахӗ — пирӗн чӑн ҫӑлкуҫӗ,
Шӑнкӑртатать вӑл ӗмӗр-ӗмӗре.
Унпа кӑна поэт хайне ҫул уҫӗ,
Унпа кӑна вӑл чӗрӗ тӗнчере.

Асаттесен-асаннесен халалӗ —
Ытарайми паха тӑван чӗлхе!
Хӗрӳллӗ сӑвӑсемпе вӑл калӗ
Хӑватлӑ шухӑшсем этемлӗхе.

Чӑваш халӑх писателӗ Илпек Микулайӗ чӗлхемӗр хӑвачӗпе мӑнаҫланса та хӑпартланса ҫапла ҫырать: «Чӑваш чӗлхи — сӗм авалхи чӗлхесенчен пӗри. Истори ӑна пысӑк хак парать. Вӑл авалхи чӗлхе кӑна та мар, хӑйӗн пуянлӑхӗпе те конкретлӑхӗпе, кирлех пулсан, культура шайӗпе те Европӑри ытти пур халӑх-

сен чӗлхипе тава кӗрсе хисеплӗ вырӑн йышӑнма вӑй ҫитерет».

Тата тепӗр чӑваш халӑх писателӗн Александр Артемьевӑн йӗркисем те тӑван чӗлхемӗре чунтан юратса ҫырнӑ мухтав юрри евӗрлӗ янӑраҫҫӗ: «Эй, тӑван чӗлхемӗр! Эсӗ чӑваш юманӗ пек ватӑ та патвар, хӑвӑн хӑватна ҫухатмасӑр, ӗмӗртен-ӗмӗр, ҫултан-ҫул тӗрекленсе ӳсетӗн, юман вутти пекех хӗрӳллӗ те вӑйлӑ ҫунатӑн; чӗре кӳтсе ҫитсен — ӑшӑтатӑн; кирлӗ чухне — ҫунтаратӑн; тӑваншӑн эсӗ — тӗттӗмри ҫул маякӗ; тӑшманшӑн — тытамакӗ. Эсӗ чӑваш тӗрри пек паха та илемлӗ, асамлӑ та ытарлӑ. Эсӗ чӑваш юрри пек кӗвӗллӗ те янӑравлӑ; санра чуна ачашлама е амантма, ҫӗклеме е ӳкерме, хавхалантарма, ҫунатлантарма хӑват пур; вӑрман пек пуян, хир пек уҫӑмлӑ эсӗ... Ирӗклӗ ҫӗршывра ӗмӗр ирӗклӗн янӑра эсӗ! Тайма пуҫӑм сана!»

Тӑван халӑхӑмӑрӑн хӑйӗн кун-ҫулӗпе ҫыхӑннӑ паллӑ кунӗсене, мухтавлӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсен менелникӗсене анлӑн палӑртасси йӑлана кӗнӗ. Ҫав уявсенче хамӑр чӗлхемӗрӗн илемӗпе хӗлхемӗ яланах куҫ умне яр уҫҫӑн тухса тӑраҫҫӗ.

Чӗлхемӗре те самана самаях лутӑркарӗ ҫав. Сталин пуҫ пулса тӑнӑ ҫулсенче Мускаври, ҫӗршыври ытти республикӑсемпе облаҫсенчи нумай чӑваш хаҫачӗсемпе журналӗсем, издательствӑсем хупӑнчӗҫ, наци культурин ытти йышши вучахӗсем сӳне-сӳне ларчӗҫ. Н. Хрущев тапхӑрӗнче республика тулашӗнчи районсемпе хуласенчи чӑвашла хаҫатсем пурте тенӗ пекех тухма чарӑнчӗҫ. Л. Брежнев вӑхӑтӗнче шкулсенче чӑвашла вӗрентессине хӗссе хучӗҫ...

Халăхăмăра, чĕлхемĕре пысăк инкек, пĕтес хăрушлăх килсе çапрĕ.

Çапла, наци культурине ертсе пырас енĕпе кăлтăксем питĕ нумай. Юлашки тапхăрта республикăра çак çитменлĕхсене пĕтерес, ку ĕçе вăйлатас тесе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Чĕлхе çинчен Закон тухрĕ. Кирлĕ, паха документ. Пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртесчĕ ăна. Паллах ĕнтĕ, çав Закона ĕçе кĕртесси пĕр ертсе пыракан тытăмсенчен çеç килмест. Пурин тата кашнин пуçаруллă та тăрăшуллă пулмалла. Чи кирли — шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентессине лайăх йĕркелемелле. Ку ĕçе маттур вĕрентекенсене шанса памалла. Тăван чĕлхепе вĕренӳ хатĕрĕсем те ытлă-çитлĕ пулччăр. Ача-пăча валли хайлавсем, юрăсем, кĕнекесем нумайрах кăлармалла. Телевиденипе чăваш юмахĕсем тăрăх ӳкернĕ мультфильмсем кăтартма тытăнмалла. Тем те, тем те тумалла...

Çамрăк тусăм, сана чăваш чĕлхине çине тăрса вĕренме, ăна упрама чĕнсе калатăп. И. Яковлевăн, Çеçпĕл Мишшин халалĕсене яланах асра тыт. Тăван сассăмăр çĕр çинчи ытти халăх чĕлхисемпе пĕр шайра сулмаклăн янăратăр, тĕнчене тĕс кĕрттĕр, илем кӳтĕр.

# «Куҫҫульсӗр пӑхаймарӑм»

Хамӑр халӑха ҫутта кӑларнӑ И. Яковлев хӑйӗн асаилӗвӗнче чӑваш вӑййи ҫинчен ҫапла каланӑ: «Юрри питӗ селӗмччӗ, ташши ҫепӗҫ те хӳхӗмччӗ. Мана ачалӑхӑм аса килчӗ, эпӗ ку ӳкерчӗке куҫҫульсӗр пӑхаймарӑм». Вырӑссен паллӑ ҫыравҫи Н. Гарин-Михайловский чӑваш вӑййине савса-юратса ҫырнине те чуна хускатмасӑр вулаймастӑн. «Ҫакӑ вӑл эпӗ халиччен нихӑҫан та курман хӑйне евӗр юрӑ-кӗвӗ те, тӗлӗнмелле вӑйӑ-ташӑ та пулчӗ, — тет вӑл. — Урӑхла каласан, сцена ҫинче балетпа оперӑра курнӑскер. Анчах ку вӑл балет та, опера та марччӗ, пурнӑҫчӗ».

Ҫӗршыври ытти хӑш-пӗр паллӑ ҫынсем те чӑваш вӑййисене мухтаса ҫырса хӑварнӑ. Ҫамрӑксен ташши-юрри куракансене хӑйӗн иксӗлми илемӗпе, таса чӗрӗлӗхӗпе, аслӑ асамлӑхӗпе тыткӑнланӑ, кӑмӑлне хускатнӑ.

Унашкал паха уявсемпе йӑла-йӗркесем чӑвашсен чылай: Акатуй, Ҫӑварни, Ҫимӗк, Мӑнкун, Сӑпас, Илем... Вӗсенче — халӑхӑмӑрӑн чунӗ, кун-ҫулӗ-шӑпи, ӑраскалӗ-телейӗ, ӗмӗчӗ-тӗллевӗ, ӗненӗвӗ-шанчӑкӗ, йӑпанӑвӗ-хавхаланӑвӗ. Йӑламӑрсем ӗмӗртен ӗмӗре тӑсӑлнӑ, ламран лама куҫса пынӑ. Чӑвашсем шӑпах

çавсемпе ёнтĕ хăйсен хуйхи-суйхине пусарнă, канăç-киленĕçне тупнă, малалла талпăннă, çутă пулăмсем патне туртăннă. Уявсемпе йăласем çамрăк ăрăва йĕркеллĕ ӳсме, сăпайлă та маттур пулса çитĕнме пулăшнă, аптраманлăхпа пиçĕхтернĕ, йыварлăхсемпе чăрмавсене хăюллăн çĕнтерсе пыма вĕрентнĕ.

Халăхăмăрăн кун-çулĕ пит йывăррăн малалла шунă май йăламăрсен те хура-шур самаях курма-тӳсме тиврĕ çав. Ӳсĕмсĕрлĕх тапхăрĕнче вĕсене пусахлама, хĕсме хăтланчĕç. «Авалхи уявсем — иртнĕ пурнăçăн еткерĕ», — тенине тăтăшах илтме пулатчĕ. Чăваш уявĕсене хатĕрленсе ирттермелли сценарисемпе меслетлĕх кăтартăвĕсем тухманпа пĕрехчĕ. Çапла вара йăламăрсем çулран-çул хавшанăçем хавшаса пынă, пĕтсе ларас патнех çитнĕ. Вĕсене ирттерекен ялсем сахаллансах юлчĕç. Вăйăсем хăшпĕр ялсенче кăна упранкаларĕç. Чылай çĕрте уявсен хăш-пĕр тĕсĕсене сайра хутра театрсемпе клубсен сценисем çинче кăтарткаланипе çырлахаççĕ.

Ача чух, вăрçă хыççăнхи çулсенче, ялта Çăварнине паллă тунине лайăх астăватăп. Урамсем, тăвайккисем хаваслă шăв-шавпа тулатчĕç: пĕрисем — йĕлтĕрпе, теприсем çунашкапа ярăнатчĕç. Виççĕмĕшĕсем лашапа катаччи чупатчĕç. Сăвă-юрă, купăс сасси янăраса тăратчĕ. Хĕле çапла чаплă ăсататчĕç ун чух, çуркуннене чыслăн кĕтсе илетчĕç. Шел, пурăна киле çакнашкал ырă йăласем манăçа тухма пуçларĕç...

Юрать-ха, самана улшăнчĕ. Тинех кăвак хуппи уçăлчĕ темелле. Халăха наци тĕлĕшĕнчен аталанма майсем пулса тăчĕç. Эппин, пирĕн

те, чăвашсен, хускалмалла, чăвашлăха упраса хăварас тесе кирлĕ ĕçсем тумалла. Халăхăмăрăн ырă уяв йывăçĕн хуçăлсах ӳкеймен турачĕсене çĕклесе, тӳрлетсе, суранне çыхса, тулăххăн шăварса тепĕр хут чĕртсе ешертесчĕ.

Ку тĕлĕшпе, çамрăк тусăм, эсĕ те чылай усă кӳме пултаратăн. Аслă ăру çыннисенчен çав уявсем çинчен ыйта-ыйта пĕл, çырса ил, тĕпче. Çитĕннисемпе пĕрле вĕсене йĕркелесе ирттерме хутшăн. Тăван халăхăн уявĕ-йăлипе шкулта, урокра тата вĕсен тулашĕнче ирттерекен ĕçсенче туллин усă кур. Чăвашсен авалтан пыракан пархатарлă йăлисем ку чухнехи çĕнĕ йăласемпе килĕшӳллĕн аталанччăр, ачасене пурнăçа юратма, чăн-чăн Çын пулса çитĕнме вĕрентчĕр.

# Эх, тӗррӗмӗр, эрешӗмӗр!

Уйӑхлӑ-хӗвеллӗ, ереветлӗ-теветлӗ, кӗтеслӗ-кӗтеслӗ, ҫырullӑ эсӗ. Мӗн чухлӗ асамлӑх, вӑрттӑнлӑх санра. Мӗн чухлӗ эпир пӗлменни, вулайманни. Санра — чӑвашсем тӗнче тытӑмӗ ҫинчен шухӑшлани те, ӑна ӑнлантарни те. Санра — халӑхӑмӑрӑн чунӗ, шӑпи, хавалӗ. Санра — унӑн хастарлӑхӗ, сапӑрлӑхӗ, чӑтӑмлӑхӗ. Эсӗ — пирӗн мулӑмӑр, пуянлӑхӑмӑр. Юратать сана чӑваш хӗрарӑмӗ, кӑмӑлтан шӑрҫалать. Ахальтен-им вӑл вӑтӑр ытла чикӗмпе ӗҫлет.

Тӗррӗмӗр, ӗмӗрӳ санӑн вӑрӑм. Вӑхӑт шунӑ май эсӗ татах та ӗлккенленетӗн, селӗмленетӗн. Автономине тунӑ хыҫҫӑн республикӑмӑр гербӗпе ялавне илем кӳтӗн. XX ӗмӗрӗн 20—30-мӗш ҫулӗсенче эсӗ промышленность мелӗпе анлӑн ҫӗкленни те паллӑ пирӗншӗн. Тӗрлӗ хатӗр-хӗтӗр ӑсталакан ҫирӗме яхӑн эртел ӗҫленӗ чӑваш ҫӗрӗ ҫинче ун чух. Эрешлӗ тумтир ҫӗленӗ, сӗтел-пукан ӑсталанӑ, савӑт-сапа тунӑ, карҫинкка ҫыхнӑ, чӳлмек хӗртнӗ. Уҫлӑхран таврӑннӑ хыҫҫӑн А. Николаев летчик-космонавт пӗрремӗш хут Шупашкара килнине аса илер-ха тата. Халӑх хӑйӗн паттӑрне капӑр сӗлкӗ ҫине хунӑ ҫӑкӑрпа кӗтсе илчӗ.

Чӑваш тӗрри, эсӗ ӑҫта-ӑҫта кӑна чаплӑ курав-

сене лекмерӗн пулӗ: Брюсселе, Монреале, Осакăна, Нью-Йорка... Тӗнчене хăвăн илемӳпе пӗр хут çеç мар тӗлӗнтертӗн, ăмсантартăн.

Тӗррӗмӗр, мӗнле пурăнатăн-ши эсӗ паян? Тӳрремӗнех калар: лайăххипе пӗрлех уйрăм ялсенче тӳнтер пулăмсем те палăраççӗ. Хăшпӗр амăшӗсем, асламăшӗ-кукамăшӗсем çак ырă йăлана пăрахасшăн. Хăйсем те тӗрлемеççӗ, хӗрӗсемпе мăнукӗсене те вӗрентмеççӗ.

Йывăç касса эрешсем тăвасси пирки те çавнах каламалла. Хуласенчи чăваш ачисен ларутăрăвӗ вара тата та йывăртарах вӗт. Мӗнрен килет çакă? Тен, наци тумне тăхăнакан хӗрарăмсем сахалланса пынинчен? Тен, аслă ăрăвăн тăван йăла-йӗркене упрас туртăмӗ чакнинчен? Тен, шкулсемпе культура çурчӗсем тӗрӗ-эреше халăх хушшине сарасси, ăна ачасене вӗрентесси çине сӳрӗккӗн пăхнинчен?

Тымар ан яччăрах çакнашкал киревсӗр пулăмсем. Тӗррӗмӗре чечеклентерме вара майсем çителӗклех. Тӗслӗхрен, культура çурчӗсенче, клубсенче çамрăксене алӗç ăсталăхне хăнăхтармалли кружоксем уçма пулать. Вӗсене вырăнти ятлă ăстасем ертсе пыччăр. Чăваш тӗрри-ӳнерӗпе паллаштарассине мӗншӗн аслă тата вăтам шкулсен вӗренӳ программине кӗртес мар? Уроксемпе лекцисене пултаруллă тӗрӗçӗсем, платниксемпе столярсем ирттерччӗр.

Ваттисем пурнăçран уйрăлаççӗ. Çавна май авалхи тӗрӗсем ан çухалччăр пирӗн. Тепӗр чух ялсенче таçтан килнӗ çынсене куратăн. Вӗсем тухьясемпе теветсем, măй çыххисемпе шӳлкемесем пуçтараççӗ. Пархатарлă тӗллевпе мар, паллах. Услам илес туйăм канăç памасть вӗсене. Кӗмӗл тенкӗсем, хаклă шăрçасемпе чулсем

кăсăклантараççĕ çав этемсене. Пӳлмеллех, эппин, вĕсен çулне. Халăхăн чи таса та сăпайлă туприне салатма памалла мар. Хамăрăнах тирпейлĕн пухса музейсене хумалла, куравсем йĕркелемелле, килес ăрусем валли упрамалла.

Кунта, паллах, аслисен тимлĕхĕсĕр ĕç тухас çук. Иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенчи пек тĕрĕллĕ-эрешлĕ япаласем кăларакан предприятисем те уçасчĕ. Шкулсенче те ку енĕпе тĕрлĕ усăллă ĕçсем йĕркелеме пулать. Çавăн чух ачасем çитĕннисен ăсталăхне те алла илĕччĕç, укçаллă та пулĕччĕç.

Ялсенче çуртсене тĕрĕпе илемлетесси анлă сарăлнă-ха. Çак йăлана хулана та куçарасчĕ. Ку енĕпе çитĕннисен, пуçлăхсен çине тăмалла. Пĕр вăхăт, иртнĕ ĕмĕрĕн 50—60-мĕш çулĕсенче, çак ĕç чиперех хускалнăччĕ темелле. Анчах каярахпа чарăнса ларчĕ.

Халĕ урăх самана. Ку енĕпе майсем уçăлчĕç темелле. Апла пулсан ĕçлесчĕ. Хулари кашни çурт чăваш эрешĕпе çиçсе-ялтăраса тăтăрччĕ.

Эх, тĕррĕмĕр-эрешĕмĕр! Аталансам, вăйлансам, тăван халăхна тата çӳлерех çĕкле, хăвăн илемӳпе çĕр çинчи этеме савăнтар, хавхалантар, ăна ырришĕн кĕрешме, усала çĕнтерме çунат хуш, вăй пар!

Чăваш ачи, тăван халăхăмăрăн тĕрри-эрешĕпе туслă пул! Аслă ăрури ăстасенчен тĕррĕмĕрĕн асамлă вăрттăнлăхĕсене вĕренсе юл, ăна аталантарма, малалла сарма, пуянлатма хастарлăн хутшăн.

# Шӑхлич тума пӗлетӗн-и?

Ҫак ыйтупа калаҫма шухӑшланӑ май чӑваш халӑх поэчӗн Петӗр Хусанкайӑн «Чӗре юрри» кӗнекинчи сӑвӑ йӗркисем аса килчӗҫ:

Пархатарлӑ Грузи
Янратать чонгури,
Кӑмӑллӑ Карели
Кантеле калать.
Ылтӑн Украинӑн
Ӗмӗрхи бандури,
Туркменсен дутарӗ
Сан ятна мухтать...
Эп те уҫӑ саслӑ
Кӗслеме тытам-и,
Ӗнерсе пӑхам-и
Хӗрӗх хӗлӗхне...

Чӑнах та ӗнтӗ, ҫӗршыври ҫитмӗл ҫичӗ халӑхӑн музыка инструменчӗсем те тӗрлӗ-тӗрлӗ. Пӗрисен авӑ — чонгури, теприсен — кантеле, виҫҫӗмӗшӗсен — бандурӑпа дутар. Мӑн асаттемӗрсем музыка инструменчӗсем шырама таҫта юта ҫӳремен. Вӗсене хӑйсене кирлӗ пек ӑсталанӑ, майлаштарнӑ, хайланӑ. Шӑпӑр, кӗсле, сӑрнай, нӑй, тӑмра, кавал, хӳпхӳ, шӑхличӗ тата ытти йышши инструментсем пулнӑ халӑхӑмӑрӑн. Ӑсталанипе кӑна ҫырлахман хамӑр ӑрӑва пуҫаракансем, вӗсене тирпейлӗ тытнӑ, пӗлсе усӑ курнӑ, упранӑ. Шӑпӑрпа кӗслесӗр, сӑрнайпа палнайсӑр, тӑмрапа параппансӑр чӑвашӑн пӗр туй та, пӗр уяв та иртмен. Пирӗн аслӑ йӑхташсем хӑйсенчен уйрӑлса кайнӑ ҫынна та юлашки ҫула юрӑ-кӗвӗпе ӑсатнӑ, тупӑкӗ

çине ларса сăрнай-шăпăр каланă. Тепĕр чухне кĕвĕ-çемĕ хатĕрне те унтах хурса янă. Чунĕ леш тĕнчере те ун сассипе киленĕç-канăç туптăр тенĕ ĕнтĕ.

Халăхăн музыка инструменчĕпе калакан пултаруллă çынсен сăнарĕсем чăвашсен классика литературине кĕрсе юлнă. К. Ивановăн «Нарспи» поэминчех, тĕслĕхрен, эпир «маттур шăпăрçăпа» «хăй кĕтĕвĕ патĕнче шăхличĕ калакан ачана» куратпăр.

Шел, халĕ пирĕн вĕсене ытларах чухне çыравçăсен хайлавĕсемпе юмахсенче çеç тĕл пулма тивет çав. Сайра хутра тата илемлĕ пултарулăх ушкăнĕсен концерчĕсенче итлекелеме тӳр килет. Самана пăрнăç-кукрăçĕсемпе сулнăк-сулăнчăкĕсене пула вĕсем пурте тенĕ пекех пурнăçран çухалас хăрушлăх умне тухса тăчĕç. Çитĕнекен ăрусенчен чылайăшĕ вĕсен кĕвви-çеммине илтме мар, тĕсне-сăнне те курман. Тĕрĕссипе вара, пирĕн инструментсем тăванла халăхсенни пекех янăравлă та селĕм. Вĕсен тулаш енĕ те, сасси-ĕнерĕвĕ те хăйне евĕр, илемлĕ, илĕртӳллĕ, чăн чăвашла. Шăпăра, сăмахран, выльăх хăмпипе усă курса хатĕрленĕ. Сăрная çăка хуппинчен ăсталанă пĕчĕк пăрăхсене пĕр-пĕрин çине тăхăнтарса тунă. Тăмра сĕрме купăса аса илтерет. Кĕсле — вырăссен «гуслийĕ» евĕрлĕ инструмент. Хӳпхӳ — хăмăшран хайланă вăрăм шăхлич.

Туятăр ĕнтĕ, енчен те тĕрлĕ саслă çакнашкал паха хатĕрсем çĕтсен, чăваш халăх ӳнерĕшĕн çеç мар, пĕтĕм тĕнче культуришĕн пысăк çухату пулĕччĕ.

Чăнах та, çĕнетӳ саманин усă варкăшĕнче пĕр тапхăр чăваш наци инструменчĕсем кăш-

тах куранкаласа илчӗҫ. Фольклор уявӗсенче вӗсен кӗвви тӑтӑшах илтӗнме тытӑнчӗ. Ҫак асамлӑ хатӗрсене ӑсталакан тата вӗсемпе усӑ куракан пултаруллӑ ҫынсем ҫуралчӗҫ: В. Русков, В. Чернов, Н. Эриванов, В. Адюков, В. Чекушкин. Анчах юлашки вӑхӑтра чӑваш музыка инструменчӗсен сасси каллех вӑйсӑрланчӗ. Вӗсене ҫӗнӗрен хӑватлӑн чӗртсе тӑратас тесен питӗ нумай ӗҫлемелле. Пурин те: республикӑри пуҫлӑхсен те, вырӑнти культура ӗҫченӗсен те, ҫитӗннисен те, ҫамрӑксен те.

Ҫапах та ялсемпе хуласенче чӑваш халӑхӗн музыка инструменчӗсем пуҫӗпех ҫӗтнӗ тенине темшӗн ӗненес килмест. Ҫавӑн пекех вӗсене тӑвакан тата калакан ӑстасем те пӗтмен-тӗр. Апла тӑк ҫӳремелле, шырамалла, пуҫтармалла: пӗрчӗн-пӗрчӗн, тӗпренчӗк-тӗпренчӗкӗн.

Патшалӑх шайӗнче тумалли ӗҫсем чылай. Музыка инструменчӗсене хамӑр патри фабрикӑсенче хатӗрлесе кӑларассине йӗркелесчӗ. Культура ӗҫченӗсем чӑвашсем пурӑнакан ялсемпе хуласене (республика тулашне те) тухса ҫӳресен халӑхӑн музыка инструменчӗсен тӗсӗсене, вӗсене ӑсталакансене тата калакансене шута илсе тухсан аван пулӗччӗ. Кайран Шупашкара чӗнсе илсе канашлу-семинар ирттерме пулӗ. Унта вырӑнти культура ӗҫченӗсемпе музыка шкулӗсен вӗрентекенӗсем те пулччӑр. Чӑваш халӑх музыка инструменчӗсен профессиллӗ ансамбльне йӗркелеме те вӑхӑт ҫитнӗ. Тахҫан, иртнӗ ӗмӗрӗн 40—50-мӗш ҫулӗсенче, Шупашкарта кӗслеҫӗсен ансамблӗ пулнӑ теҫҫӗ. Ӑна Георгий Алексеев ертсе пынӑ-мӗн. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи йывӑр вӑхӑтра ӗҫленӗ пулсан халӗ мӗншӗн ӗҫлес мар ҫакӑн пек ансамблӗн?

Халăхăн музыка инструменчĕсен ăстисен конкурсĕсене те йĕркелесчĕ. Наци юрă-кĕвĕ хатĕрĕсемпе паллаштарассине, вĕсемпе выляма хăнăхтарассине, вăтам шкулсемпе аслă шкулсен, музыка шкулĕсемпе колледжсен, ача сачĕсен вĕренӳ программине кĕртесчĕ. Вĕсем валли кĕнекесемпе пособисем пичетлесе кăларасчĕ. Композиторсен те шухăшламалли çук мар. Наци инструменчĕсемпе калама хайлавсем çырмалла. Шел, хальлĕхе вĕсем питех те сахал.

Паллах, çак ĕçе çитĕнекен ăрăва явăçтармасан эпир нимĕн те тăваймăпăр. Эсĕ, çамрăк тусăм, хамăрăн наци инструменчĕсен уйрăмлăхĕсене тĕпчесе вĕренме тăрăш, вĕсене хăвăн аллупа тума тата калама хăнăхса пыр. Шкулсенче çав тĕллевпе ятарлă кружоксем ĕçлесен хаваспах хутшăн.

Ĕлĕкрех чăваш ачисем ялсенче пурте шăхлич тума пĕлетчĕç. Темĕнрен те ăсталатчĕç: çăкапа йăмра хуппинчен, хăмăшран, курăк кĕпçинчен, тăмран... Хальхи ачасем аплах мар пек. Атьăр-ха, çамрăк тусăмăрсем, çак туйăма вăйлатар, хамăрăн мĕн авалтан пыракан ыр йăлана сӳнме парар мар. Кашниех шăпăрпа кĕсле, сăрнайпа шăхличĕ, параппанпа кавал тума тата вĕсемпе юрă-кĕвĕ шăратма вĕренер. Ăнăçу сунатăп сире.

# Хуплу, шăрттан, пӳремеч...

Пĕчĕк чухне эпир, ял ачисем, Çăварнипе Мăнкун, Çимĕк е ытти уяв çитессе чунран кĕтеттĕмĕр. Ма тесен атте-анне пире уяв ячĕпе çĕнĕ тумтир çĕлесе тăхăнтартатчĕ. Вылямa-савăнма май туса паратчĕ. Чи ырри вара — тутлă апат-çимĕçпе сăйлатчĕ. Ăна хатĕрлеме хамăр та хутшăнаттăмăр. Шăрттан туни акă халĕ те асрах.

Анне кăтартнă пек, сурăх какайне вакласа пĕчĕк-пĕчĕк татăксем тăваттăмăр. Кайран çавна ыхрапа, пăрăçпа, тăварпа хутăштарса сиктереттĕмĕр. Юлашкинчен аша выльăхăн хырăмлăхне чиксе тултараттăмăр та çатма çине хурса вĕри кăмакана лартаттăмăр. Вăрах тăратчĕ вăл унта. Шăрттан пиçессе тӳсеймесĕр кĕтеттĕмĕр. Вара техĕмлĕ те сĕтеклĕ апата ăш каниччен çисе киленеттĕмĕр.

Ăстаччĕ çав аннемĕр. Мĕн кăна çукчĕ-ши унăн уяв сĕтелĕ çинче: тултармăшĕ те, хуплăвĕ те, пӳремечĕ те, чăкăчĕ те, студенĕ те, капăртми те, юр-варĕ те...

Аннене аса илетĕп те халăхăм çинчен шухăшлатăп. Тем те пĕлет, тем те пĕçерет чăваш. Апачĕсем унăн хăйне евĕр, урăх халăхăннипе пăтрашăнми, чăн чăвашла, илемлĕ, тутлă,

сётеклĕ, сипетлĕ. Çак ăсталăх авалтан, ăруран ăрăва куçса, пуянланса пынă. Ваттисем хăйсен паха ӳнерне-опытне çамрăксене панă, вĕрентсе хăварнă.

Шел, çак ырă йăла паян кăштах хавшарĕ. Çамрăксенчен тепĕр чухне пăшăрхантаракан сăмахсене те илтме тивет. Хамăр апатсене пĕçерни пирки ыйтсан: «Хатĕрлеме пĕлместпĕр», «Пире никам та вĕрентмен», «Вĕсемсĕрех пурăнатпăр», — тет хăшĕ-пĕри. Çак хуравсен тупсăмĕсене тавçăрма йывăрах та мар пулĕ. Вăл — амăшĕсемпе асламăшĕсем, кукамăшĕсем хăйсен мăнукĕсемпе хĕрĕсене чăваш апачĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарса паманнинче, çав ăсталăха алла илме пулăшманнинче.

Çамрăк туссене апат хатĕрлеме вĕрентмелли кружоксем те сахал-ха пирĕн. Ытларах йĕркелесчĕ вĕсене тата шайне хăпартасчĕ. Вăтам шкулсемпе колледжсенче, аслă шкулсенче ятарласа занятисем ирттересчĕ. Вĕрентӳ ĕçне пултаруллă поварсене, халăх хушшинче палăрнă ăстасене явăçтарасчĕ. Кулинари колледжĕсем те ку енĕпе тĕслĕх кăтартма тивĕç.

Хуласемпе ялсенче наци апачĕсен куравĕсемпе конкурсĕсене йĕркелессине йăлана кĕртесчĕ. Столовăйсемпе кафесене тата ресторансене çăкăрпа апат-çимĕçе хисеплеме чĕнекен ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсем, тĕрĕсемпе ӳкерчĕксем илем кӳччĕр. «Апачĕ тутлă пултăр!» тесе чăвашла çырни курăнса тăтăр.

Чăваш Ене хăнасем — çитĕннисемпе ачасем — çулленех йышлăн килеççĕ. Ку, паллах, лайăх. Çав вăхăтрах вĕсене пур чухне те хамăр апатсемпе сăйлайманни вара — япăх. Чылай столовăйсемпе кафесенче, ресторансенче те

чăваш апачĕсем çукпа пĕрех. Эх, кашни килен-каяна какай шӳрпипе серте яшки, шарккупа хуран кукли, шăрттанпа тултармăш çитересчĕ те çав...

Халăх апачĕ — нацилĕхĕн пĕр енĕ, уйрăлми пайĕ. Вăл çĕтес-çухалас пулсан халăхăн хăйне евĕрлĕхĕ те чухăнланса, мĕскĕнленсе юлать. Чăваш хăй нацийĕн апатне манни, унран ютшăнни — питĕ киревсĕр япала. Вăл — çуратнă халăхне хисеплеменниех, унран писниех, чăвашлăха çухатниех.

Эппин, упрар-ха хамăрăн юратнă апат-çимĕçе, çĕклер-ха ун ятне-шывне. Вăл тĕнчери халăхсен апачĕсем хушшинче сумлă вырăн йышăнтăр. Ăна тутанакан кашни çын çапла калатăр: «Эх, техĕмлĕ те иккен чăваш апачĕ!»

## Улăп, Юмах паттăр, Сарлантей...

Астăватăп-ха, республикăри ачасен журналĕн редакцийĕнче ĕçленĕ вăхăтра пĕр хĕрачаран çыру илнĕччĕ. Унта вăл хăйĕн асламăшĕ нумай юмах пĕлни, вĕсене ял ачисене кала-кала пани, лешсем унти сăнарсем пек çивĕч те хăюллă пулассишĕн тăрăшни çинчен пĕлтернĕччĕ. Асламăшĕ каланине тăнланипе кăна çырлахмасть мăнукĕ. Юмахĕсене çыра-çыра илет, вĕсене ытти çамрăк тусĕсем патне çитерессишĕн тимлет. Çав çырупа пĕрлех хĕрача редакцие пĕр халап ярса панăччĕ. «Манăн асанне юмахне пĕтĕм ача итлесен вăл питĕ савăнĕ», — тенĕччĕ унта. Тĕрĕс тунă паллах, маттур! Шутсăр пархатарлă унăн ĕçĕ.

Чăнах та ĕнтĕ, фольклор, урăхла каласан, халăх сăмахлăхĕ — наци кун-çулĕпе ăс-хакăлĕн уйрăлми пайĕ. Унра ĕç çыннисен шухăшкăмăлĕпе ĕмĕт-тĕллевĕ уççăн палăраççĕ. Фольклора пĕлмесĕр халăх историне ăнланма хĕн. Ахальтен мар авал çуралнă чаплă хайлавсем халăхăн илемлĕх культурин ылтăн фондне кĕрсе юлнă.

Паллах ĕнтĕ, нацисен сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем хушшинче пĕрпеклĕхсем çук мар. Пурте вĕсем ирĕклĕхпе пĕртанлăха, ытлă-çитлĕ пурнăçпа

тăнăçлăха, ырăлăхпа илеме мухтаççĕ. Çав вăхăтрах кашни халăхăн фольклорĕ хăйне евĕрлĕхпе уйрăлса тăрать. Чăвашсен те çавах. Ăна тăван халăхăн пултарулăх фантазийĕ калăплана. Унра — чăвашсен пурнăçĕпе йăли-йĕрки, чĕлхи, сăнарлăхĕ. Пирĕн фольклор халăхăмăр сĕм авалтан тытăнсах пусмăрçăсене хирĕç хаяррăн кĕрешнине, Степан Разинпа Емельян Пугачев çарĕсемпе хутшăнса хĕрӳллĕн çапăçнине, Улăппа Юман паттăр евĕр мухтавлă ывăлĕсемпе тивĕçлипе мухтаннине çирĕплетсе парать.

Çамрăк ăрăва лайăх çитĕнтерес ĕçре фольклор пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Çакнашкал хайлавсем этемĕн ăс-хакăл тĕнчине пуянлатаççĕ, унăн таса та çутă туртăмĕсене, çепĕç туйăмĕсене, илемлĕх енĕсене аталантараççĕ. Вĕсем çынна хисеплеме, Тăван çĕршыва упрама, ĕçе юратма вĕрентеççĕ. Çăкăра халалланă ваттисен сăмахĕсемех акă мĕнешкел тарăн шухăшлă чăвашсен: «Çăкăртан аслă ан пул», «Çăкăр тутине ĕçлекен пĕлет», «Пăтă çиес тесен пăри акма ан ӳркен»... Е тата хресчен хăйĕн ачисене хуçалăха тĕрĕс те пĕлсе тытса пыма хушнине систерекен йĕркесене илер: «Ир акакан вăрлăхсăр юлман», «Кирлĕ кунра катăк пуртă та кирлĕ», «Салатма çăмăл, пухма йывăр»...

Çапла вара, фольклор — пурнăç кĕнеки, халăх ăслăлăхĕн çӳпçи. Апла тăк çамрăк ăрăвăн ăна сăнамалла, тĕпчемелле, тишкермелле. Пурнăçăн пăрнăç çулĕпе пынă чух вăл вĕрентсе каланине, паха шухăшсене тĕпе хумалла, йăнăш тăвасран асăрханмалла.

Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсене нумай пĕлекен, вĕсемпе куллен тата туллин усă куракан

çын — пысăк культурăллă, анлă тавракурăмлă, ăслă, пултаруллă. Фольклор ăна хăйĕн ĕçĕнче ӳсĕмсем тума, йывăрлăхсемпе чăрмавсене çĕнтерсе хăюллăн утма, малашлăха курса тăма май парать. Халăх хайлавĕсенчи тĕслĕхсемпе усă курса хатĕрленĕ сăмах, лекци-калаçу итлекенсемшĕн яланах ĕнентерӳллĕ, витĕмлĕ.

Тепĕр явапллă ĕç пирки аса илтерес килет сана, çамрăк тусăм. Ку вăл — фольклорăн ĕнчĕ пек, ахах-мерчен пек тĕслĕхĕсене тирпейлĕн упрасси, сайра тĕл пулакан хайлавсене ваттисенчен, ăсчахсенчен çыра-çыра илесси, вĕсене килес ăрусем валли пуçтарасси. Сĕм авал, çырулăх пуçланиччenхи тапхăрта, çуралнă сăмахлăхран чылайăшĕ, шел те ĕнтĕ, паянхи куна çитеймен, самана кукăрĕсенче сапаланса çĕтсе юлнă. Çухалнине тавăраймăпăр, пуррине упраса хăварасчĕ. Фольклор ăстисенчен, шур сухаллă ăсчахсенчен вĕсем мĕн пĕлни-астунине хут çине ӳкерсе юласчĕ, диктофонпа, кĕсье телефонĕпе çырса илесчĕ.

Фольклор енĕпе шкулта мĕн тума пулатьши? Ман шутпа, унпа усă курса стенд йĕркелеме, стена хаçачĕ, алăпа çырса журнал кăларса тăма май пур. Халăх сăмахлăхĕпе илемлетнĕ концертсемпе литература уявĕсене те куракансем хапăлласа йышăнаççĕ. Вĕсемпе вырăнлă усă курсан уроксен витĕмлĕхĕ те ӳсет.

Халăх хайлавĕсене «Тантăш» хаçатра, «Самантпа» «Тетте» журналсенче пичетлесе кăларсан, радиокăларăмсенче, Чăваш телевиденийĕнче янăратсан аван пулмалла. Эппин, ярса пар, çамрăк тусăм, хăв çырса илнĕ хайлавсене. Ку ĕçе тантăшусене те явăçтар.

# Упрансам, чăтăмлăх

Канадăри Эдмонтон хули. 2001 çулхи çурла уйăхĕ. Кунта çăмăл атлетика енĕпе тĕнче чемпионачĕ пырать. Спортсменсен йышĕ пысăк. Çурçĕрте вырнаçнă çак патшалăха нумай-нумай çĕршывран чи вăйлисем килнĕ. Вĕсем — тĕрлĕ халăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем. Раççей команди, тĕпрен илсен, вырăссемпе чăвашсенчен тăрать. Унта çичĕ чăваш. Пурте — хăвăрт утакансемпе чупакансем. Çавна май пирĕн халăха çак енĕпе иртекен ăмăртусем уйрăмах хытă кăсăклантарчĕç.

Акă пилĕк çухрăма чупакансем стартран кĕпĕр-р! хускалса каяççĕ. Малтанласа ушкăнпах пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр чупаççĕ-ха. Вăхăт шунăçем тата çул кĕскелнĕçем пĕри тепринчен иртсе каять, унтан ăна иккĕмĕшĕ хăвалаcа çитет, кайран виççĕмĕшĕ маларах тухать. Куракансем чăваш хĕрĕн Ольга Егоровăн чуппине куç илмесĕр сăнаççĕ. Старт хыççăн Ульха малтанласа спортсменсен пысăк ушкăнĕпе пĕрлех чупрĕ-ха. Унтан вара çав йышран ытларах та ытларах малалла кайса пычĕ. Хăйĕн умĕнчисенчен пĕрне хăваласа çитрĕ, унтан теприне, кайран виççĕмĕшне хыçала тăратса хăварчĕ. Кĕçех румын хĕрĕпе Габриэла Сабопа танлашрĕ, унран иртсе те кайрĕ. Старта тухма

умтапхӑр чупӑвӗччен пӗр кун юлсан ҫеҫ ирӗк парсан та, Ольга ҫухалса каймасть, нӑйкӑшса ӳкмест. Пирвайхи ӑмӑртура иккӗмӗш вырӑна тухать те лӑпкӑн кӑна финала хатӗрленме тытӑнать. Ҫине тӑрса, чӑтӑмлӑн, тӗплӗн ӗҫлет. Ӑмӑртура вара никам валли те пӗр шанӑҫ хӑвармасӑр финиша чи малтан ҫитет, ылтӑн медаль ҫӗнсе илет. Чемпионат тӑршшӗпех Атӑл ҫи пикине «кӑшланӑ» Г. Сабона намӑса тӑратса хӑварать. Румынка саккӑрмӗш вырӑна тӑрса юлать, чӑваш хӗрне вун ултӑ ҫеккунт таран выляса ярать.

Канадӑри тӗнче чемпионатӗнче Ольгӑпа пӗрлех ытти чӑваш ҫамрӑкӗсем те паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Олимпиада Иванова хӑвӑрт утакан ылтӑн, Светлана Захарова марафонка бронза медальсем ҫӗнсе илеҫҫӗ. Раҫҫей спортсменӗсем хушшинче вырӑссемсӗр пуҫне ытти халӑхран тухнисем тӗнче шайӗнчи ӑмӑртусенче ҫавӑн чухлӗ нумай медаль илни халиччен пулманччӗ-ха теҫҫӗ. Чӑваш Ен пек пӗчӗк республикӑшӑн тӗлӗнсе каймалла капмар ҫитӗнӳ ку!

2003 ҫулта Чӑваш Енре хӑвӑрт утассипе Европӑн V Кубокӗ иртрӗ. Унта Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ командине кӗртнӗ республика спортсменӗсенчен вун пиллӗкри хӗрача Вера Соколова палӑрчӗ. Вунӑ ҫухрӑмлӑ хутлӑхра хӑй ҫулӗнчисен хушшинче иккӗмӗш вырӑна тухрӗ, кӗмӗл медаль ҫӗнсе илчӗ.

Ӑҫта-ши ҫак ҫӗнтерӳсен сӑлтавӗпе тупсӑмӗ, чӑн вӑрттӑнлӑхӗ? Чи малтанах — халӑхӑмӑрӑн вышкайсӑр пысӑк чӑтӑмлӑхӗнче. Куна Вера Соколова та ҫирӗплетет: «Паллах, чӑтӑмлӑх кирлӗ. Чӑн-чӑн спортсмен пулас тесен йывӑрлӑхсене чӑтса ирттерме пӗлмелле. Ҫавӑн

витĕр пурин те тухмалла. Тăрăшмалла. Харпăр хăй вăйне шанмалла».

Çапла, тӳсĕмлĕхпе çирĕплĕх — чăвашсен никĕс пĕлтерĕшлĕ паллисем. Вĕсем наци характерĕн ытти тĕп енĕсемпе — тĕлĕнмелле хастарлăх-тăрăшулăхпа, сăпайлăх-сапăрлăхпа, тасалăх-тӳрĕлĕхпе, аптраманлăхпа — тачă çыхăнура тăраççĕ.

Çак ырă туртăм-палăрăмсем чăваш ачинче мĕн пĕчĕкрен, мĕн пепкерен чăмăртанса, пусăтарăнса пыраççĕ. Çуркунне ача-пăча юр кайнă-кайманах урамра е укăлчара çаруран чупса çӳрет-и, çуллахи пăчă-шăрăхра хĕрӳ хĕвел айĕнче яра кун çĕр улми пуссине кăпкалать-и, кĕрхи сивĕ йĕпе-сапаллă кунсенче хирте чĕкĕнтĕр кăларать-и, хĕллехи шартлама сивĕре çиле хирĕç темиçе çухрăмра ларакан шкула чупать-и — кашни пулăмах унăн шăм-шакне тĕреклетет, пиçĕхӳ кӳрет. Пурнăç шунăçемĕн чăваш ачисен çак паха енĕсем яшлăх ĕмĕрне куçса малалла аталанаççĕ, çĕнĕ сĕткен илсе пуянланаççĕ.

Чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх — чăваш халăхĕн наци паллисенчен пĕри. Çакă чăвашран тухнă спортсменсен çитĕнĕвĕнче те сисĕнет. Вăй хумасăр, тăрăшмасăр ниçта та, çав шутра спортра та, çитĕнӳ тăваймастăн. Шупашкартан Етĕрне еннелле каякан аслă çул çине тухăр-ха эсир: çил-тăман вĕçтерет-и, çумăр лӳшкет-и, хĕвел пĕçертет-и — яланах унта çуран чупакан, хăвăрт утакан, йĕлтĕрпе ыткăнакан, велосипедпа вирхĕнекен яш-кĕрĕме куратăр. Çавсем ĕнтĕ вĕсем — Раççейĕн спортри чапне çĕклеме хатĕрленекен чăваш ачисемпе çамрăкĕсем.

Чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх чăваш халăхĕшĕн мĕн

авалтан тӗп мул, нимӗнпе танлашайми пуянлăх, пурнăç тыткăчи шутланнă. Тем тӗрлӗ хăрушлăх витӗр те çăлăнса тухма, чӗрӗ юлма, йăх-ăрăва сыхласа хăварма май панă.

Пирӗн несӗлсем пăлхарсем пулнине пурте пӗлетпӗр. XIII ӗмӗрте хаяр тăшман Пăлхар патшалăхне пуçӗпех аркатса тăкнă, унăн мӗнпур хулисемпе ялӗсене кӗле çавăрнă, вăйпитти арçынсене вӗлерсе тухнă. Сывă юлнисем: ватăсемпе ачасем, хӗрарăмсем, аманнисемпе сусăрланнисем вăрмансене тарса пытаннă, çӗнӗрен пӗр йыша пӗрлешнӗ, пӗтӗçнӗ, чăмăртаннă. Темиçе ӗмӗр хушши шăла çыртса, вăя пухса малалла талпăннă, усăннă çунатсене çӗнӗрен çӗкленӗ. Чăваш ятпа тӗнчене мăнаçлăн тухнă.

Раççей патшалăхӗнче пурăннă чух та шăпи халăхăмăра пылпа çу хыптарсах кайман-ха. Асап-тертне мăй таранах курма тивнӗ унăн. Чăвашсем вырăссемпе, ытти тăванла халăхсемпе пӗрле çичӗ юта хирӗç кӗрешнӗ, выçлăхне те, политика хӗсӗрлевне те, ытти йышши йывăрлăха та пайтах тӳссе иртternӗ. Хальхи саманара та чăрмавсем сахал мар.

Çӗнейӗпӗр-ши вӗсене, çамрăк тусăм? Иккӗленер мар. Несӗлӗмӗрсем ӗмӗрсем хушши пурнăçăн кăткăс çулӗпе пуçӗсене усмасăр хастарлăн малалла утнă пулсан эпир те утăпăр. Халăхăмăр çӗнтернӗ те, çӗнтерет те, çӗнтерӗ те. Çак ӗçре пире хамăрăн тӗп пахалăхсем — ӗмӗртенхи ытарайми чăтăмлăхпа тӳсӗмлӗхӗмӗр, тăн-тăнлăхпа çирӗплӗхӗмӗр — пулăшса пырӗç. Эппин, çав мулăмăра куç шăрçи пек упрар, сыхлар, хӳтӗлер, малалла аталантарар.

# Кӗвӗçӳ ырӑ тӑвать-ши?

Çамрӑк тусӑм, эпӗ сана юмах каласа парас-шӑн. Юмахӗ ку кӗнекере-мӗнре çук. Ӑна эпӗ халӑх хушшинче илтнӗ.

Таçта çапла, тӗрлӗ халӑх çыннисем пӗр-пӗринчен инçех те мар, икшерӗн, ентешпе ентеш калаçса тӑраççӗ пулать. Пӗрремӗш ушкӑнри икӗ çын: «Эсӗ те, эпӗ те — профессор. Пирӗн Авраам тусӑмӑрӑн çеç çук çавӑн пек чыслӑ ят. Атя-ха иксӗмӗр ӑна та профессора тухма пулӑшар», — теççӗ тет. Иккӗмӗш ушкӑнрисем: «Санӑн та машина пур, манӑн та пур. Пирӗн Мустафа тусӑмӑрӑн çеç çук. Атя-ха иксӗмӗр хутшӑнса ӑна та машинӑллӑ тӑвар», — теççӗ тет. Виççӗмӗшӗсем: «Эсӗ те, эпӗ те, Çемен тусӑмӑр та пӗрешкел хӑтлӑ çуртра пурӑнатпӑр. Анчах вӑл çакӑнпа çырлахмасӑр чаплӑраххине лартас тесе тӑрмашать. Ура хурар мар-и, пиртен иртсе ан кайтӑр», — теççӗ тет.

Малтанхи икӗ ушкӑнрисем хӑш халӑх çыннисем иккенне калаймастӑп. Юлашкисем вара чӑвашсем пулнӑ имӗш.

Çапла çав, çамрӑк тусӑм, пирӗн, чӑвашсен, пархатарлӑ енсемпе пӗрлех (эпӗ сана вӗсемпе маларах паллаштарнӑччӗ) япӑх палӑрӑмсем те пур. Çав шутра: хамӑра хамӑр хисеплеменни,

мĕскĕнленни, чăвашлăха хӳтĕлеменни, пĕтĕçӳсĕрлĕх-сапаланчăклăх, кĕвĕçӳ-вĕчĕхӳ...

Чăнах та, юнăмăрти сĕм-сĕм авалран тытăнса темле майпа питĕ-питĕ шала кĕрсе вырнаçнă киревсĕр туртăм-сулăмсем мĕн чухлĕ сиен туман пулĕ халăхăмăра. Социаллă кĕрешӳре, политикăпа общество тата экономикăпа культура ĕçĕсенче, чăвашсене чăмăртассишĕн тата пĕтĕçтерессишĕн пынă талпăнура мĕн чухлĕ чăрмантарман-тăр. Эх, ăçтан кăна ĕлкĕрет-ши çав усал япала: пур тĕле те сĕкĕнсе кĕрет, хирет, пăсать, пăлхатать. Ахальтен мар ăна хамăрăн сăваплă асаттемĕр И. Яковлев та асăрхамасăр иртме пултарайман. Тăван халăхне пехилленĕ май вăл çапла каланă: «...Чăваш хушшинче пĕр-пĕр килĕшӳсĕр ĕç час-часах пулкалать. Эпĕ çавна пĕрре анчах курман. Çапла акă чăвашран хăшĕ те пулин мала туха пуçласан ыттисем ăна такăнтарма пăхаççĕ, çулне пӳлеççĕ. Вара унăн та ырă ĕмĕчĕ татăлать, çине пыркансем хăйсем те тип-типĕ тăрса юлаççĕ. Эсир апла ан пулăр. Çӳле çĕкленекене мĕн хал çитнĕ таран çĕкленме пулăшăр. Хăпарса çитсе тĕрек илсен вăл вара хăй сире аялтан çӳле турта-турта кăларĕ. Малти урапа куссан хыçалти унран юлмасть. Пĕр-пĕрин сăмахне тăнласа пурăнни, пĕрне-пĕри ырăлăх туса тăни пурнăçа хăват парать. Çакна хытă шанса тăрăр...»

Тĕрĕсех ĕнтĕ, пĕр-пĕрне пулăшсан, хавхалантарсан çитĕнӳ нумай тума пулать. Паян эпир тăван халăхшăн çунса пурăннă тата пурăнакан маттур чăвашсене чылай пĕлетпĕр. Кучаплă йыша, паллах, чи малтан Иван Яковлевич Яковлева хăйне кĕртетпĕр. Вăл тĕлĕнмел-

ле йывăр саманара пурăнса чăвашсем валли питĕ нумай паттăр ĕç туса хăварнă: пуçласа Чĕмпĕрте чăваш шкулне уçнă, ăна ертсе пынă, çĕр-çĕр учитель хатĕрлесе ялсем тăрăх салатнă, хамăрăн ӳнере аталанма анлă майсем туса панă, чăваш алфавитне йĕркеленĕ, букварьсем кăларнă, калавсем çырнă...

Совет саманинче ӳссе çитĕнсе ăслăлăхăн çӳллĕ тӳпине хăпарнă, тăван халăхăн шанчăклă пултару хунавĕсене кайран хăйсем хыççăн туртса çĕкленме пулăшнă хастар чăвашсем çĕршерĕн пирĕн. Хăш-пĕрисене кăна аса илер: Г. Волков академик, М. Сироткинпа И. Антипов-Каратаев тата А. Вишняков член-корреспондентсем, И. Корнилов, А. Изотов, В. Егоров, С. Сайкин, В. Смольков, Е. Владимиров, В. Димитриев, П. Сидоров, Г. Ахмеев ăслăлăх тухтăрĕсем тата ыттисем те. Тавах вĕсене.

Çав вăхăтрах, шел пулин те, Чăваш Ен çитĕнтерсе тĕнче тăрăх салатнă «пысăк» çынсем хушшинче мăнкăмăллăхпа вĕçкĕнлĕх серепине лекнĕ каçăр сăмсасене те курма тивет-ха. Вĕсем хăйсене çуратнă çĕршыва манса кайнă, тăван халăхран йĕрĕнеççĕ, ютшăнаççĕ, ăна пулăшас тесе урлă выртана тăрăх та çавăрмаççĕ.

Кĕвĕçӳ-вĕчĕхӳ ытти халăхра та çук мар, анчах, ман шутпа, чăвашсен ытларах та-и тен. Вăл — пирĕншĕн чăн-чăн тăшман, чăтмалла мар усал япала. Вăл кĕвĕçтерекене те, кĕвĕçекене те пысăк сăтăр тăвать. Ăна пулах тата миçе çемье тĕп пулать. Кĕвĕçекене кĕве çиет тесе ахальтен каламан çав.

Мĕн авалтан пыракан киревсĕр енсене, паллах, самантра тасатса пĕтереймĕн. Кунта куллен тата тĕплĕн тăрăшни кирлĕ.

Унран хăтăлас тесен пирĕн, чăвашсен, мĕн ачаранах питĕ тимлĕ пулмалла, хамăртан çирĕп ыйтмалла, хамăр çине тиркевлĕ пăхмалла. Кашниех пурнăçра хăйĕн никампа пăтрашăнми, хăйĕн çеç шутланакан йĕрне туптăр. Ырă туртăмсене вăл мĕн пĕчĕкрен амалантарса, вăйлатса пытăр. Кашниех хăй пек пултăр, хăйне евĕр пурăнтăр. Кĕвĕçӳ ытларах çын хăйĕншĕн ют пулнă чух, хăйне ыттисенчен уйăрмасăр пăхнă вăхăтра çуралать. Кĕвĕçекен этем пурнăçра хăйĕн вырăнне тупайманнине пĕлтерет.

Çине тăрсан чăваш юнĕнчи-чунĕнчи путсĕр палăрăмсем сахалланаççех. Пыра киле, тен, пуçĕпех пĕтĕç. Çакна асра тыт, çамрăк тусăм. Киревсĕр туйăмсен тыткăнне лекесрен асăрхан. Ку енĕпе тантăшусене те пулăш.

# Ан сиктерсем, кăмăл-сипет

Кăмăл-сипет, вырăсла куҫарас пулсан, «нравственность» тенине пӗлтерет. Нимӗҫсен паллă публицисчӗ Томас Манн ҫапла каланă: «Кăмăл-сипетлӗ ҫын — пурнăҫăн чăн-чăн ҫынни». Ҫав халăхăн тепӗр ăслăлăхҫи-шухăшлавҫи Альберт Эйнштейн ҫырса хăварни те кăсăклă. «Пӗтӗмӗшле илсен, — тенӗ вăл, — мӗнпур этем пуянлăхӗсен никӗсӗ кăмăл-сипет пулса тăрать». Ф. Достоевский те кăмăл-сипет пахалăхӗсемпе ҫеҫ общество малалла аталанса чечекленессине систерсе каланă.

Кашни халăхах тӗнчери кăмăл-сипете никӗс вырăнне хурса йышăннипе пӗрлех ăна хăй енчен те мӗнле те пулин пуянлатма тăрăшнă. Унашкал лайăх енӗсем чăваш халăхӗн те пулман мар. Ҫакна вырăссен ятлă-сумлă ҫыравҫисенчен чылайăшӗ асăрханă. Тӗслӗхрен, Сергей Диковский «Ӗҫченсен республики» ятпа 1936 ҫулта тухнă очеркӗнче пирӗн ҫул-йӗр ăстисен ӳсӗмӗсене кăтартса ҫапла ҫырать: «Расҫейри урапа ҫулӗсен киревсӗрлӗхне чухлакан ҫын кăна чăваш халăхӗн ӗҫченлӗхӗпе ҫинетăраслăхне чăннипе хаклама пултарать». Йӳрӗклӗхпе хастарлăх чăвашсен хăйне евӗр паха енӗ пулнине ҫавăн пекех А. Радищев, А. Чапыгин, В. Не-

мирович-Данченко тата ыттисем те палăртса хăварнă. Л. Толстой чăвашсен тасалăхне-тӳрĕлĕхне, ĕçе пурнăçласлăхне, урăх çыннăн хуйхипе тертне ăнланма пĕлнине палăртнă. Çак халăхăн ырă кăмăлĕ, ăшпиллĕхĕ, çивĕч ăсĕ, пĕтĕçӳлĕхĕпе хăюлăхĕ, сăмах вĕççĕн çӳрекен тулăх поэзийĕ çинчен М. Салтыков-Щедринпа Н. Гарин-Михайловский çырнă. Тутарсен чаплă çыравçи Г. Баширов хайланă йĕркесене те вулама кăмăллă. «Пирĕн чи çывăх кӳршĕсемпе туссем, — тенĕ вăл, — чăвашсем! Ламран лама кайрĕ вĕсен сăпайлăхĕ, мăнаçланманни, ыттисемпе килĕштерсе пурăнни. Никам та вĕсене сĕмсĕр тесе ӳпкелеме пултараймасть. Ĕçре тӳрĕ кăмăллă, туслăхра шанчăклă пулас енĕпе вĕсем ырă тĕслĕх пулма пултараççĕ». Хамăр халăхăн мухтавлă ывăлĕсем Иван Яковлевпа Спиридон Михайлов та чăвашсен сăпайлăхĕпе чыслăхĕ, чун тасалăхĕпе суясăрлăхĕ çинчен хăйсен хайлавĕсенче ăшшăн аса илнĕ. Иван Яковлевич Кăнна Кушкинчи хресченсем пӳрт-çурта нихăçан та питĕрменнине, вăрлас ĕçе хутшăнманнине, эрех-сăрапа иртĕхменнине, аскăнса пурăнманнине палăртнă.

Чăвашсем хăйсен çак пархатарлă туйăмĕсене ăруран ăрăва парса пынă, вĕсене нумайлатас тата тарăнлатас тесе тимленĕ. Çав палăрăмсене халăхăмăр çĕр çинчи пĕтĕм этемлĕхе ыр кăмăллăн халалланă, унăн кăмăл-сипетне сарма витĕм кӳнĕ.

Хальхи вăхăтра эпир час-часах халăхсен хутшăнăвĕ пирки калаçу пуçласан «вĕсен пĕрпĕринпе толерантлă пулмалла» тенине илтетпĕр. «Толерантлăх» вăл чăвашла куçарсан — юта чăтса пурăнаслăх. Пирĕн халăх ыттисемпе

хутшăннине палăртнă чух нихăçан та ун пек ăнлавпа усă курман. Ку сăмах анăçран хальтерех çеç куçнă. Пирĕншĕн ют вăл. Эпир, чăвашсем, халăхсем яланах пĕр-пĕрне хисеплесе, сума суса, юратса, тус-тăванлă пурăнассине тĕпе хунă, хуратпăр та. Çак туртăм та пирĕн кăмăл-сипетлĕхĕмĕрпех çыхăннă. Упрасчĕ ăна, сыхласчĕ, малалла тăсасчĕ. Кăмăлсипет, паллах, ăнсăртран, кĕтмен çĕртен килекен пулăм мар. Çын ăна мĕн пепкерен, хăйне тăн кĕнĕ малтанхи самантранах туйма-сисме, сăнама, ăша хывма пуçлать. Çитĕннĕçемĕн вăл кăмăл-сипетне сарса-пуянлатса, аталантарса, тарăнлатса пырать. Çак сипетлĕх витĕмĕпе çын ĕмĕрех малалла утать, ăнăçусем тăвать.

Çамрăк тусăм, эсĕ ху та паян этемлĕхĕн кăмăл-сипет тĕнчинче пурăнатăн, унăн ăшпиллĕхне куллен туйса тăратăн. Шкулта-и, килте-и, ял хушшинче-и, вăйăра-и — кирек хăçан та чи малтан аслисем мĕн каланине, мĕн шутланине аса илетĕн. Вĕсем пек виçеллĕ-тирпейлĕ, тĕплĕ те йĕркеллĕ пуласчĕ тетĕн. Ырри патне туртăнатăн, сивлеклĕх енчен пăрăнма тăрăшатăн. Эсĕ питĕ тĕрĕс тăватăн.

Халĕ эпир урăх тапхăрта пурăнатпăр. Пасар пурнăçĕ, компьютерпа Интернет самани теççĕ ăна. Çак хутлăхра пур çĕрте те пархатарлă улшăну чылай пулса иртет. Кашни яла тенĕ пекех асфальтлă çул çыхăнтарать, автобус çӳрет. Хăтлă шкулсем, культура çурчĕсем, стадионсем уçăлаççĕ, пурăнмалли капăр кермексем çĕкленеççĕ. Килсенче чылай чух, хулари пекех, газпа, шывпа усă кураççĕ. Нумай çĕрте ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем, кооперативсем, фермерсем, арендаторсем ăнăçлă ĕçлеççĕ: тыр-

пул çитĕнтерессĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессĕ... Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачи-пăчи ĕçпе туслă пултăр, таса та тӳрĕ чунлă, ăслă-тăнлă, пултаруллă ӳстĕр тесе тимлет.

Шел пулин те, çамрăк тусăм, хăвах куратăн: паянхи кун пач кăлтăк-шăйрăксăр, типтикĕс те яп-яка мар çав. Пирĕн хушăмăрта авă пĕчченшерĕн тертленсе пурăнакан карчăксемпе стариксем те çук мар. Ывăлĕ-хĕрĕсем, хулара йăва çавăрнăскерсем, ватăсем çинчен аса та илмессĕ, килсе пулăшас темессĕ. Ялсенче хăш-пĕр яш-кĕрĕмĕн сăпайлăхĕпе сапăрлăхĕ чакса пыни те питĕ пăшăрхантарать. Çамрăксем тĕрлĕрен киревсĕр ĕç тунине, ĕçкĕпе иртĕхнине, вăрçни-çапăçнине, хирĕçни-ятлаçнине те тăтăшах курма тивет.

Мĕншĕн чакса, ситрелсе пырать-ши чăваш çыннин кăмăл-сипечĕ? Ăçта-ши унăн сăлтавĕ? Тен, вăл — аслă ăрусем нацин авалтан килекен чипер йăли-йĕркисене çамрăксем патне çитерейменнинче, вĕсен чун-чĕрине витерейменнинче, ача-пăчапа яш-кĕрĕме ашшĕ-амăшĕпе аслашшĕ-асламăшне хисеплеме вĕрентейменнинче, пĕчĕкрен ĕçе юратма, пуян чун-чĕреллĕ пулма ăс парайманнинче? Тен, вăл — çитĕнекен ăрăва пĕчĕкренех тĕнче культурин паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарайманнинче, чиркӳрен уйăрса янинче?

Кăмăл-сипет ачалăхран пуçланать, аталанать терĕмĕр. Аслă педагог В. Сухомлинский ачана мĕн сăпкаранах ырăпа усала тĕрĕс курма вĕрентме сĕннĕ. Апла, ăна манар мар.

Çамрăк тусăм, санăн та кунта шухăшламалăх пур.

# Тусăр пурнăç — упа пурнăçĕ

Туспа туслăха халаллана çак сăмахăма Самар облаçĕнчи Похвиçнĕ районĕнчи вĕренекенрен килнĕ çыруран пуçлас терĕм. «Мана пулăшаймăр-ши? — тенĕ вăл унта. — Туслăх çинчен эпĕ нумай вуланă. Хаçат-журналта та, кĕнекере те. Анчах вăл пуррине темшĕн ĕненес килмест. Курман мар-ха, хăш-пĕрисем: «Эпир çывăх та шанчăклă туссем», — тесе пĕрер эрне е уйăх пек пĕрле çӳреççĕ те уйрăлса каяççĕ. Çавăнпа та сире ман валли чăн-чăн тус тупса пама ыйтатăп. Арçын ача-и унта, хĕрача-и — кирек хăшĕ те юрать. Анчах ĕмĕрлĕх, пĕр çăвартан пурăнмалли тус пултăр».

Эпĕ вара ăна çапларах хурав патăм: «Çамрăк тусăм, сана тӳрех хирĕçлетĕп! Çук, туса, эс калана пек, шыраса тупаймастăн, сутăн та илейместĕн. Ăна пăхса ӳстерме кăна пулать. Сад ăсти улмуççисене, ытти çимĕç йывăççисене епле тимлесе пăхнине курнă-и эсĕ? Çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те вĕсенчен уйрăлма пĕлмест вăл. Çуркунне-кĕркунне ылашши туратсене иртет, вуллисене шуратать, çулла шăварса, кăпкалатса, апатлантарса тăрать, хĕлле сивĕпе шăнса сиенленесрен, юр хуçасран, мулкачсемпе шăшисем кăшласран сыхлать.

Тус-юлташа та санӑн ҫавнашкалах ҫитӗнтермелле, туслӑха та ҫавӑн пек упрамалла. Хӑв килӗштернӗ-кӑмӑлланӑ ҫынпа хирӗҫсе каясси те, чӗрре кӗресси те пулӗ. Ун пек чухне кутӑнлашса, шӑмарса ан ҫӳре. Тусу патне ҫиллӳне пусарса ху пыр чи малтан, йӑнӑшне ӑнланса илме пулӑш. Чӑт, каҫар, кӗреш. Кайран ӳкӗнмӗн. Эс тӑрӑшни сая каймӗ. Юлташу хӑй айӑпне туйса илӗ, сан тимлӗхӳне лайӑхпа хуравлӗ, саншӑн вута та кӗме хатӗр маттур этем пулса тӑрӗ».

Туслӑх ҫынна кашни самантрах, кашни утӑмрах кирлӗ. Акӑ эсӗ киле парса янӑ задачӑна шутлатӑн, шутласа кӑлараймасӑр асапланатӑн — ҫийӗнчех тусу патне чупатӑн. Е тата уроксене хатӗрлесе ҫитернӗ хыҫҫӑн санӑн урама тухса вӑйӑ выляс шухӑш кӗрсе кайрӗ — ӑна кайса чӗнетӗн. Е сан аҫуна та, аннӳне те калама хӑяйман шухӑш ҫуралчӗ... — каллех ҫывӑх ҫыннун килне вӗҫтеретӗн.

Ҫапла, туслӑх — калама ҫук хӑватлӑ вӑй, ҫитӗнӳсен никӗсӗ, ӑнӑҫусен ҫӑлкуҫӗ. Ҫумра шанчӑклӑ ҫын пулсассӑн вӗренме, пурӑнма ҫӑмӑл. Йывӑрлӑхсемпе чӑрмавсене те туспа пӗрле ним те мар ҫӗнтеретӗн. Вӑл пулмасан вара питӗ кансӗр, кичем. Туссӑр пурнӑҫ упа пурнӑҫӗ пек. Пӗччен путеке тукмак тытать тесе ваттисем ахаль каламан-тӑр ҫав.

Туслӑх — ҫав тери анлӑ пӗлтерӗшлӗ пуплев, сарлака ӑнлав. Вӑл уйрӑм ҫынсене ҫеҫ мар, халӑхсене те пӗр тӗвве ҫыхса, пӗтӗҫтерсе тӑрать. Ӑна чӑвашсем те, ытти халӑхсем евӗрех, мӗн авалтан хакланӑ, упранӑ, малалла аталантарнӑ. Вӗсем хӑйсен кӳршисемпе — вырӑссемпе, тутарсемпе, ҫармӑссемпе, ирҫе-мӑкшӑсемпе,

удмуртсемпе, пушкăртсемпе — яланах килĕштерсе, тату пурăннă, телей çитсен пĕрле савăннă, хĕн килсен пĕр-пĕрне ал панă, çĕкленĕ. Пирĕн ентешĕмĕрсем ытти халăхсен ятлă-сумлă ывăлĕ-хĕрĕсемпе туслă пулнине çирĕплетекен тĕслĕхсем историре питĕ нумай. Сăмахран, чăвашсене çутта кăларакан И. Яковлев вырăссен чаплă демократ-педагогĕпе И. Ульяновпа юнашар тăрса ĕлĕкхи хивре самана хирĕпе паттăррăн утнă, вак халăхсене вĕрентсе пĕлӳллĕ тăвас ĕçе пĕтĕм вăйне панă. Хамăрăн паллă çыравçăсенчен Çеçпĕл Мишши украин сăвăçипе Ф. Пакрышеньпе, Ç. Элкер белорус юрăçипе Я. Купалăпа, Ухсай Яккăвĕ вырăс поэчĕпе А. Твардовскипе уйрăлми туссем пулнă. Е тата тĕнче уçлăхне тухнă малтанхи кăйкăрсене Андриян Николаев чăвашпа Юрий Гагарин вырăса илер. Çак паттăрсем пĕр-пĕрне тĕлĕнмелле хытă юратни, хавхалантарни, пулăшни халĕ пуриншĕн те паллă.

Туслă пулма ху çитĕнсе çитессе, çулсем хушăнасса кĕтсе лармалла мар. Пĕчĕклех пуçламалла ăна, ача чухнех йĕркелемелле. Ача садĕнче юлашки сыпăкри ушкăна çӳретĕн-и е кĕçĕн классенче вĕренетĕн — çумăнта яланах савăнăçа е хуйха çурмалла пайламалли тусу пултăр. Вăл этеме ĕмĕрĕн кирек хăш тапхăрĕнче те сывлăш пекех кирлĕ. Вĕреннĕ чухне те, специальность алла илсе ĕçлеме пуçласан та, пенсие кайсан та унсăрăн ĕç тухас çук.

Туслăх пĕлтерĕшне туйман çын суккăр, мĕскĕн, айван. Унăн хăть çăмăл автомашина пултăр, хăть Японире кăларнă чаплă техника, хăть ылтăн япаласем — вăл пурпĕрех чухăн. Ахальтен мар этемлĕх çавна пиншер çул сăнаса-тĕп-

чесе темӗн чухлӗ каларӑшсем, тупмалли-сутмалли юмахсем хывнӑ. Чӑвашсен те ҫителӗклӗ вӗсем. Хӑшӗ-пӗрисене аса илер-ха: «Шанчӑклӑ тусӑн хакӗ ҫук», «Тус вӑл — пурнӑҫ сиплӗхӗ», «Юлташсӑр ҫын тымарсӑр йывӑҫ пек», «Пуслӑх хуҫӑлсан ҫӗнӗ тӑвӑн, туслӑх татӑлсан — мӗн тӑвӑн?»

Апла тӑк мӑн асаттесен сӑмахӗсене асрах тытасчӗ пирӗн. Хальхи саманара туслӑх пире уйрӑмах питӗ кирлӗ: усал-тӗселпе кӗрешме, чун тасалӑхне упрама, малалла утма.

# Çуткăçу пур-и санăн?

Çуткăç тесе эпĕ «идеал» сăмаха чăвашларах каласшăн пултăм. Нумай чĕлхере ку пуплев çав ятпах çӳрет. Чăннипе вара вăл — грек сăмахĕ. Тĕс, сăнар, ăнлав тенине пĕлтерет. Идеала асăнсанах пирĕн куç умне пархатарлă тĕслĕх, аякра ялкăшакан çуткăç (факел), якалсатуптанса çитнĕ паллă пулăм, талпăну-ăнтăлăвăн çӳллĕ тĕллевĕ тухса тăрать.

Кашни класпа ушкăнăн тата уйрăм çыннăн пурнăç çулĕ çинче мал енче хăй кăмăлĕпе суйласа илнĕ йăлтăр çăлтăр пек çиçекен çутă паллă пур. Вĕсем ун патне хастаррăн утаççĕ. Унран вăй-хăват, çĕкленӳ, хавхалану илеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ паллă совет педагогĕ В. Сухомлинский воспитани ĕçĕнче, çав шутра кăмăлпа характера çирĕплетнĕ çĕрте те, ырă тĕслĕхĕн вăйĕ калама çук пысăк пулнине палăртнă.

Çутă сăнар патне туртăннине тепĕр майлă телей çулĕ вырăннех хума пулать. Вăл этеме шалтан туптанма, аталанма пулăшать. Идеал кашни ачан, кашни çамрăкăн йĕркеленет. Тепĕр чухне çакă йĕри-тавралăх витĕм кӳнĕ май пĕчĕккĕн, сисĕнчĕксĕр пулса пырать.

Çамрăк ăру çутă сăнар валли пĕр-пĕр паллă

героя суйласа илет. Анчах та кунта ăна суйласа илни кăна çителĕксĕр. Унăн çав персонажа чăн пурнăçри хăй килĕштерекен çын сăн-сăпатĕнче курма, асăрхама пĕлмелле. Идеал вырăнне вĕренекенсем камсене суйласа илеççĕ-ха? Ытларах чухне — ашшĕ-амăшне, пĕлĕш-тантăшне, тус-юлташне, илемлĕ хайлавсемпе кинофильмсенчи, радиопа телекăларăмсенчи геройсене.

Тĕнчипе чапа тухнă çыравçăсем, ӳнерпе ăслăлăх ĕçченĕсем камсенчен тĕслĕх илсе ӳснĕши? Ытларах чухне вĕсем хăйсемпе юнашар çынсен, тăванĕсен, аслă юлташĕсен паха енĕсене ăша хывса çитĕннĕ.

Çамрăк Пушкина акă унăн ăшă чунлă та сăпайлă няни Арина Родионовна хавхалану кӳнине пурте пĕлетпĕр. В. Ленин та ача чухне хăйĕнчен хăй çирĕп ыйтма, хистеме пултарнипе, виçевлĕ тĕллевсем лартса вĕсене пурнăçлассине тĕрĕс йĕркеленипе палăрса тăнă. Унăн çуткăç вырăнĕнче аслă пиччĕшĕ Саша шутланнă.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн И. Яковлевăн «Асаилӳсем» кĕнекинче вăл ачалăх çулĕсенче суккăрланнă аслашшĕне Пахома юратни çинчен çырнă йĕркесем пур. Çулăмлă сăвăçăмăр Çеçпĕл Мишши хăйне çамрăклах тăлăха хăварнă ашшĕн çутă сăнарне мĕн виличченех асра тытни те паллă пирĕншĕн. Тĕнче уçлăхне икĕ хут тухнă паттăр кăйкăрăмăр А. Николаев амăшне сума суса, тав туса çырнине те пурте вуланă эпир.

Пурнăç тикĕс килмест теççĕ. Тепĕр чухне кĕтмен çĕртен инкекĕ те сиксе тухать. Ним тума аптăраса тăратăн вара: хуйха ниçтан та ирттерсе яма май çук пек туйăнать. Куна-

шкал самантсенче хӑвпа хӑв кӑна юлни, пӗчченлӗхре пурӑнни сиенлӗ. Йӗри-тавра пӑхса, танлаштарса, тарӑннӑн шухӑшласа пӑхмалла. «Паллӑ ҫынсем ҫакӑн пек кӑткӑс та йывӑр вӑхӑтра мӗн тунӑ пулӗччӗҫ-ши?» — тесе шутламалла.

Пирӗн пурнӑҫра нушана парӑнмасӑр, шанчӑка ҫухатмасӑр малалла утнӑ ҫынсем сахал мар. Ҫавсенчен пӗри — чӑвашсен кӑвар чӗреллӗ сӑвӑҫи Альпӑрт Канаш. Хӑрушӑ чир ӑна ҫамрӑклах урараан ӳкернӗ, ҫӳрейми тунӑ. Вӑл ҫапах та нӑйкӑшса ӳкмен. Сӑвӑсемпе очерксем, статьясем ҫырма тытӑннӑ. Чӗри тапма чарӑниччenех халӑх пурнӑҫне хӗрӳллӗн хутшӑннӑ, ҫамрӑксен ҫывӑх тусӗ, шанчӑклӑ пулӑшаканӗ пулса тӑнӑ.

Ҫамрӑк туссем хушшинче литература хайлавӗсенчи сӑнарсене хӑйсен идеалӗсем туса хуракансем те йышлӑ. Пӗриншӗн ҫав ҫутӑ сӑнар — Эсхил трагедийӗнчи Прометей, теприншӗн вара — Л. Толстойӑн «Война и мир» романӗнчи Пьер Безухов, виҫҫӗмӗшӗшӗн — Ҫ. Элкерӗн «Хӗн-хур айӗнче» поэминчи Чакка, тӑваттӑмӗшӗшӗн — Хв. Уярӑн «Таната» романӗнчи Ухтиван, пиллӗкмӗшӗшӗн — Ухсай Яккӑвӗн трагедийӗнчи Тутимӗр. Ҫакнашкал героикӑлла хайлавсенчи паттӑрсен сӑнарӗсене ҫамрӑк ӑру яланах хапӑл туса йышӑнать, вӗсенчен тӗслӗх илет, хӑюллӑ та харсӑр пулма ӗмӗтленет.

Паттӑрлӑха, паллах, кирек ӑҫта та, кирек хӑҫан та, кирек камӑн та кӑтартма май пур. Сӑнанӑ та пулӗ-ха эсӗ, ҫамрӑк тусӑм, аслӑ та ӑслӑ ҫынсен кун-ҫулӗнче сайра тӗл пулакан инкек-синкеклӗ лару-тӑрава питех кураймас-

тӑн. Вӗсен ӳсӗмӗ кулленхи тикӗс ӗҫре хуллен чӑмӑртанса пынӑ. Кашни кунхи ахаль ӗҫех ҫав ӗҫченсен кӑмӑлне пиҫӗхтернӗ, кӑткӑс тапхӑрта хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартмашкӑн май туса панӑ.

Пӗр-пӗр тӗлӗнмелле паттӑр ӗҫ патне герой пӗчӗккӗн ҫитет, куллен-кун хатӗрленет. Ҫавнашкал ҫирӗп те маттур ҫынсем хушшинче чӑвашсем те йышлӑ: Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче Аслӑ Патӑрьел патӗнчи хаяр ҫапӑҫура пуҫне хунӑ П. Крепков комиссар, тӑшман дзочӗн амбразурине хӑйсен ӳчӗсемпе хупласа хамӑр ҫарсене ҫӗнтерӳ тума ҫул уҫса панӑ Е. Алексеев сержантпа А. Карташов салтак, преступниксемпе хӑюллӑн кӗрешсе вилнӗ А. Портнов милиционер, Н. Никифоров журналист тата ыттисем те.

Ҫамрӑк тусӑм, сана, сӑмах май, сӗнӳ те парса хӑварас килет. Паттӑрсен шӑпине тӗпчеме уйрӑм тетрадь е журнал ту. Унта геройӑн сӑн ӳкерчӗкне вырнаҫтар, пысӑк пӗлтерӗшлӗ вырӑнсене ҫырса ил. Ҫав маттур ҫыннӑн кун-ҫулӗнчи палӑртуллӑ самантсене, пурнӑҫ йӗркине, кил-йышне, шухӑш-ӗмӗчӗпе кӑмӑл-туйӑмне палӑртса хӑвар. Ку вӑл сана малашлӑхра кирлӗ пулӗ.

Тӗрлӗ-тӗрлӗ халӑхсен ятлӑ-сумлӑ ҫыннисен, тӗслӗхрен, Л. Толстойӑн, пурнӑҫне тишкернӗ чух тата ҫакна та асӑрхатӑн: вӗсенчен чылайӑшӗ дневниксем ҫырса пынӑ. Ума ятарлӑ тӗллевсем лартса хӑйсене ҫавсене пурнӑҫлама хӑнӑхтарнӑ. Ҫапла майпа хӑйсен вӑйсӑр енӗсене пӗтерсе пынӑ. Характерне малалла ҫирӗплетнӗ. Ҫамрӑк тусӑм, ҫак меслетпе усӑ курма эсӗ те пултармалла.

Идеала тупасси, çутă сăнара палăртасси чи кирли пулнине ăнлантăн пулĕ тетĕп. Анчах çакна та манас марччĕ. Идеала суйласа илнипех характер çирĕпленсе çитеймест. Тӳррипе каласан, унран кăмăл пиçĕхĕвĕ пуçланать çеç-ха. Малалли ăнăçу йăлтах хăвăнтан, хастарлă та пуçаруллă, тимлĕ те типтерлĕ пулнинчен килет.

Хăвăн пурнăçунта çуткăç йыхравне яланах туйса тăр, çамрăк тусăм.

# Хăвпа ху хуçа пул

Ачалăхпа яшлăх — этем кун-çулĕн пуçламăшĕ, унăн чи селĕм те хӳхĕм тапхăрĕ. Вăл — çын пурнăçĕн çуркунни. Паллă ĕнтĕ, çут çанталăкри çуркунне çу илемне çурататать. Çур вăхăтлă та тикĕс килсен, тăпрана нӳрĕкпе ытлă-çитлĕ витерсен çулла тыр-пул вăйлă çитĕнет, улăх-çаран тулăх ешерет, вырьăх-чĕрлĕх ĕрчет. Çавăн пекех ачалăх-çамрăклăх та этем ĕмĕрĕн ӳлĕмхи сыпăкĕсене ирттерме ырă майсем уçса парать. Çын шăпинче унăн пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ санăн, çамрăк тусăм, мĕн пĕчĕкрен вăл тухăçлă пултăр тесе тимлемелле. Çакна асту: çынра темĕнле хăватлă, çĕкленterӳллĕ те хавхалантаруллă вăй пур. Вăл — этем хăйне çĕнетсе улăштарассишĕн хыпăнса çунни, ăнтăлни-талпăнни. Çак вăй санăн ĕçӳнте, вĕренĕвӳнте, канăвунта, кулленхи тĕрлĕ енлĕ хутшăнăвунта палăрать. Анчах та вăл тапса-вĕресе тăтăр тесен хăвна ху пĕрмаях сăнаса-тĕпчесе пымалла, кăмăлупа характерна, шухăшусемпе туйăмусене хăнăху кӳмелле, пиçĕхтермелле.

Енчен те эсĕ пур енчен те аталаннă маттур çын пулас тетĕн тĕк, хăвăнти вăйлă тата

хавшак туртăмсене тĕплĕн пĕлме тăрăш. Тĕслĕхрен, ĕçлес пултарулăхун шайне, ку е вăл предмет патне, пĕлӳ тĕнчине туртăму пуррине палăрт. Çавăн пекех кунта хăвна ĕçре сăнаса тĕрĕслени, ĕмĕт вылявне, шухăшлавна ятарлă программа тăрăх хăнăху кӳни усăллă.

Санăн хăвăнти пархатарлă пулăмсене аталантарма, япăх енсене вара пĕчĕккĕн чакарма, юлашкинчен вĕсенчен пуçĕпех тасалса çитме май пур.

Характер ĕçре, вĕренӳре, кĕрешӳре тĕреклелет. Çакна асра тытса эсĕ шкулта кашни предметпа, кашни урокпа туллин усă кур. Санăн тантăшусенчен хăшĕ-пĕри кăмăл çирĕплĕхĕ задача шутланă май çеç палăрать тесе шухăшлать. Ку тĕрĕсех мар. Аслă классенчех акă çĕнĕ материала алла илнĕ вăхăтра çирĕп кăмăллă пулмасан нимĕн те тăваймастăн. Вĕрентекен сăмахне итлесе ларма та чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх кирлĕ. Киле парса янă ĕçе пурнăçланă самантра та çавнашкалах.

Хăвна ху воспитани парас шутпа чуну килĕштерекен темле тĕллеве тытма та, тем тĕрлĕ ĕçе суйласа илме те пултаратăн. Туртăму пур тăк, акă калăпăр, хальхи саманашăн питех те кирлĕ предметсене, — философие е кибернетикăна — тĕпчесе вĕренес задача ларт. Кусене хальлĕхе шкул программине кĕртмен. Апла пулсан сан çак енĕпе уйрăм план туса хатĕрлемелле. Вĕрентекенсемпе канашламалла, ятарласа кăларнă кĕнекесемпе, хаçат-журналти статьясемпе паллашмалла, çак темăна халалланă кинофильмсене курмалла.

Çамрăк тусăм, эсĕ хăвна ху хистеме, хăвăнтан хăюллăн ыйтма, умна тĕллев лартса ăна

пурнӑҫа кӗртме пӗл. Пурнӑҫра ҫакна ҫирӗплетекен паха тӗслӗхсем тӑтӑшах тӗл пулатӑн.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 70-мӗш ҫулӗсенче, Патӑрьелӗнчи «Авангард» хаҫатра ӗҫленӗ вӑхӑтра, пӗррехинче Ишлӗ Шетмӗри вӑтам шкулти VI класра вӗренекен К. хушаматлӑ арҫын ачана курсаттӑм. Чарусӑрччӗ вӑл, чӑрсӑрччӗ, час-часах йӗркене пӑсатчӗ, ҫапӑҫатчӗ, кӗҫӗннисене кӳрентеретчӗ. Тепӗр хут ӑна виҫӗ ҫул иртнӗ хыҫҫӑн тӗл пулма тиврӗ. Шалт тӗлӗнтерсе пӑрахрӗ вӑл. Халӗ ӑна паллама та ҫук: ырӑ енне улшӑнса кайнӑ. Йӗркеллӗ калаҫать, хӑйне типтерлӗ тытать. Лайӑх вӗренет. Манӑн ҫакӑн тупсӑмне пӗлес килчӗ. «Ҫар училищинче вӗренекен хамӑр ял ачипе туслашни пулӑшрӗ мана, — терӗ ҫакскер. — Ҫулӗпе вӑл манран пӗр-ик ҫул аслӑрах. Анчах пӗрре те хӑйне мӑнна хумасть, аслисене те, кӗҫӗннисене те хисеплесе калаҫма пӗлет, таса та тирпейлӗ ҫӳрет, вӗренӳ отличникӗ, ӑста спортсмен, пӑшалтан тӗл перет, кӗнеке нумай вулать. Вӗренме те, вулама та, выляма та вӑхӑт ҫитерет. «Епле ӗлкӗретӗн-ха эсӗ капла пурне те тума?» — тесе ыйтсан вӑл ҫапла хуравларӗ: «Хампа хам хуҫа пулни, хама ертсе пыма пӗлни пулӑшать. Шухӑш тытсан, ҫине тӑрсан — ӗҫ ӑнатех. Эсӗ те тӑрӑшса пӑх-ха — ӳкӗнмелле пулмӗ». Вара эпӗ те ун тӗслӗхӗпе пурӑнса пӑхма шутларӑм. Хама хистеме пуҫларӑм, ума уҫӑмлӑ тӗллевсем лартса вӗсене кунсерен пӗчӗккӗн пурнӑҫласа пытӑм».

Ҫамрӑк тусӑм, ҫакна та ан ман: туртас текен лав ҫине вӑй ҫитмелӗх ҫеҫ тиемелле. Вышкайсӑр пысӑк ӗҫсем, пурнӑҫлама май ҫук тӗллевсем ан палӑрт. Мекӗрленсе туртни, тапаҫланса сӗтӗрни тепӗр чух усӑ выранне сиен ҫеҫ

кӳрет, сывлăха хавшатса хăварать. Çутă ёмёте ёçе кёртнё чух ывăннине, ёшеннине туйсанах урама тух, уçă сывлăшра çӳре, пахчара е картишёнче тăрмаш.

Чăрмав-терт умёнче нихăçан та хуçăлса ан ӳк. Палăртса хунине пёр тикёссён пурнăçа кёртесси, хăвна вăй-халпа ăс-тăн, кăмăл-сипет тёлёшёнчен аталантарасси яланхи йăлу пулса тăтăр.

Çулсем иртеççё. Эсё те, çамрăк тусăм, ӳссе тёреклене çитён, аслисен ретне кёрён. Пурнăçăн кăткăс та тумхахлă çулёпе шанчăклăн, хăюллăн утăн. Ачалăхра, çамрăклăхра туптаннă кăмăлу сана малашлăхра пулăшса пырё. Ахальтен мар вырăссем çапла каланă: «Хăтлану акатăн — хăнăху выратăн, хăнăху акатăн — характер выратăн».

# Тупмалли

*Çамрăк тусăмçăм, чăваш ачи!* . . . . . . . 3
*Пĕрремĕш калаçу*
Аннемĕр — кун-çул никĕсĕ . . . . . . 5
*Иккĕмĕш калаçу*
Ытарайми тăван кĕтес . . . . . . . . 10
*Виççĕмĕш калаçу*
Пурăнах, çут çанталăк! . . . . . . . . 14
*Тăваттăмĕш калаçу*
Шăнкăр-шăнкăр чĕлхемĕр . . . . . . . 18
*Пиллĕкмĕш калаçу*
«Куççульсĕр пăхаймарăм» . . . . . . . 22
*Улттăмĕш калаçу*
Эх, тĕррĕмĕр, эрешĕмĕр! . . . . . . . 25
*Çиччĕмĕш калаçу*
Шăхлич тума пĕлетĕн-и? . . . . . . . 28
*Саккăрмĕш калаçу*
Хуплу, шăрттан, пӳремеч... . . . . . . 32
*Тăххăрмĕш калаçу*
Улăп, Юман паттăр, Сармантей... . . . 35
*Вуннăмĕш калаçу*
Упрансам, чăтăмлăх . . . . . . . . . 38
*Вун пĕрмĕш калаçу*
Кĕвĕçӳ ырă тăвать-ши? . . . . . . . . 42
*Вун иккĕмĕш калаçу*
Ан ситрелсем, кăмăл-сипет . . . . . . 46
*Вун виççĕмĕш калаçу*
Туссăр пурнăç — упа пурнăçĕ . . . . . 50
*Вун тăваттăмĕш калаçу*
Çуткăçу пур-и санăн? . . . . . . . . . 54
*Вун пиллĕкмĕш калаçу*
Хăвпа ху хуçа пул . . . . . . . . . . . 59

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего школьного возраста

**Сандр Аксар**
**(Мефодьев Александр Иванович)**

**ИТЛЕ-ХА, ЫВӐЛӐМ**

**ПОСЛУШАЙ, СЫНОК**

**Беседы**

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *В.Н. Гончаров*
Художественный редактор *А.В. Запольская*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.Г. Герасимова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

12+ Информаци продукцийӗн палли
(436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 19.07.16. Формат 84×108 1/32.
Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 3,36. Тираж 1000 экз. Заказ № К-6473. Изд. № 51.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское
книжное издательство» Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел. / факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

70.-



ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ISBN 978-5-7670-2485-8
9 785767 024858